6593. чув.

# ТĂВАН ЧĔЛХЕ

ПУÇЛАМĂШ ШКУЛĂН
ПĔРРЕМĔШ КЛАСĔНЧЕ
ВĔРЕНМЕЛЛИ КĔНЕКЕ



**ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ**
**обозначенного здесь срока**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

Тип. им. Котлякова. 26 — 6 000 000. 1961 г.

Д 6593 нув.

С. П. ЮШКОВ, В. Е. ЕФИМОВ

81(ЧУВ)-9
Ю96

# ТĂВАН ЧĔЛХЕ

ПУÇЛАМАШ ШКУЛĂН 1-мĕш КЛАСĔНЧЕ ВУЛАМАЛЛИ ТАТА ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЕ ВĔРЕНМЕЛЛИ КĔНЕКЕ

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1962

Чс(чув)(075)

## ИЗДАТЕЛЬСТВĂРАН

Ку кĕнекене пуçламăш шкулăн пĕрремĕш класĕнче вуламалли «Тăван сăмах» тата А. Т. Трофимов çырнă «Чăваш чĕлхи» кĕнекесем вырăнне кăларнă. Учебникре вуламалли материалпа пĕрлех чăваш чĕлхине пуçласа вĕренмелли материала та панă. Кĕнекен содержанине çĕнĕ программă тăрăх йĕркеленĕ.

Кăçал ку учебнике сăнаса пăхма тесе кăларнă. Учительсем учебникпе пĕр вĕренӳ çулĕ хушши ĕçлесе пăхнă хыççăн кĕнекене малалла лайăхлатас тĕлĕшпе усăллă сĕнӳсем пама пултараççĕ. Учительсен, методистсен сĕнĕвĕсене шута илсе, 1963 çулта учебнике Чăваш АССР кĕнеке издательстви юсаса иккĕмĕш изданипе кăларма палăртнă.

6593 чув.

РЕС. БИБ.

П... НО
20 07



*Шкул ачи, эс пысӑк утӑм*
*Ярса пусрӑн тӑвалла.*
*Ҫулсем уҫӑ халӗ саншӑн,*
*Ут хӑюллӑн малалла!*

*Аслӑ Тӑван Ҫӗршывӑмӑр*
*Сана савса ӳстерет.*
*Вӗрентӗр те ӑс пухтӑр,*
*Ялан маттур пултӑр, тет.*




## Хĕл ларни.

Тĕксĕм пĕлĕт, шăппăн шуса,
килчĕ хĕвеланăҫрен,
уя-хире хупăрласа,
илчĕ карса тӳперен.

Хĕл пуҫланчĕ, вĕлтĕртетсе
вĕҫсе килчĕ шурă юр;
аслăк айне тарса кĕчĕҫ
чăххи-чĕппи, самăр хур.

Шартлама сив илчĕ вăй-хал, —
Хуҫа пулчĕ, ахăрать;
Сивĕ мучи — шурă сухал —
Мамăк юрпа алхасать.

*С. Элкер.*

---

Сăвăра хĕл ларнине мĕнле кăтартса панă?

Хăвăр сăнани тăрăх хĕл ларни ҫинчен каласа парăр.

Сăвăри сăмахсемпе усă курса, ҫак предложенисене каласа пĕтерĕр:

Тĕксĕм пĕлĕт... Хĕл пуҫланчĕ...

### Тупмалли юмах.

Шурă ҫитти пĕтĕм хире витсе хучĕ.

*(Ю. ҫ...)*



## Колхозниксен хĕллехи ĕçĕсем.

Колхозниксем тыр-пула хиртен пуçтарса кĕнĕ. Ăна çапса, сăвăрса кĕлетсене хунă. Халь вĕсем çав тырра армансенче авăртаççĕ.

Хĕрарăмсем сӳс, çăм арлаççĕ, чăлха, алсиш çыхаççĕ.

Юр ӳксенех, колхозниксенчен чылайăшĕ вăрман касма кайрĕç. Тепĕр хĕле валли вутă хатĕрлеççĕ.

Бригадăсенче колхозниксем фермăсенчен хире тислĕк кăлараççĕ, юр тытаççĕ. Кĕл пухас ĕçре вĕсене шкул ачисем те пулăшаççĕ. Çуркунне валли тимĕрçĕсемпе трактористсем ял хуçалăх машинисене юсаса, йĕркелесе хураççĕ. Пур колхозсенче те çитес çур акине тимлĕн хатĕрленеççĕ.

---

Ялта хĕлле мĕнле ĕçсем тăваççĕ?

Шкул ачисем ашшĕ-амăшĕсене мĕнле ĕçсенче пулăшаççĕ?

Ваттисен сăмахĕсем.

Колхозăн пÿлми — хĕлле те, çулла та тулли.

Пĕччен сурать — типсех пырать,
Халăх сурать — кÿлĕ тăвать.

## Предложени.

Çак калава сасăпа вуласа тухăр.

### Çил-тăман.

Çил вĕрет. Çанталăк тĕксĕмленчĕ. Юр çăвать. Çулсем питĕрĕнчĕç. Кайăксем пытанчĕç. Ача-пăча урамра вылямасть.

Вуланă чухне эсир миçе хут чарăнтăр?
Малтанхи предложенире мĕн çинчен каланă?
Иккĕмĕш предложенире мĕн çинчен каланă?
Виççĕмĕш предложенире мĕн çинчен каланă?
Тăваттăмĕш предложенире мĕн çинчен каланă?
Пиллĕкмĕш предложенире мĕн çинчен каланă?
Улттăмĕш предложенире кам çинчен каланă?
Ку калавра миçе предложени?
Калав **предложенисенчен** пулса тăрать.
Çак предложенисене çырса илĕр.
Эпир кĕнеке вуларăмăр.
Эпир сăвă каларăмăр.
Эпир задачă шутларăмăр.
Эпир предложенисем çыртăмăр.
Эпир картинă ÿкертĕмĕр.
Эпир тăрăшса вĕрентĕмĕр.



## Конькипе.

Вĕçсе пырап конькипе:
Хăлхасем хĕп-хĕрлĕ.
Чăр-чăр чĕрсе пынипе
Пăр çийĕ пит йĕрлĕ.
Йăлтăр-ялтăр çиçĕм пек
Йăр та яр пыратпăр.
Алла-аллăн тытăнса,
Савăнса ярнатпăр.
Астумасăр хăш чухне
Такăнса ÿкетпĕр.
Кĕç тăратпăр та каллех
Çиçĕм пек вĕçетпĕр.

*А. Çулĕç.*

---

Хăвăр конькипе ярăнни çинчен каласа парăр.
Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.

Тупмалли юмах.

*Шывра ҫуралать,*
*шывран хăрать.*

(*Пăр.*)

## Сивĕ мучи патĕнче хăнара.

(Учитель вулать.)

Машук ҫывăрса кайнă та тĕлĕнмелле тĕлĕк курса выртать.

Вăл чăтлăх вăрманпа пырать пек. Пăхать: ун умĕнче ватă ҫын, Сивĕ Мучи ларать, ҫӳҫĕсем кăн-кăвак. Вăл пăр тенкел ҫинче юр чăмăрккисене ҫисе ларать; пуҫĕпе сулать те — ҫӳҫĕсенчен пас тăкăнать; вĕрсе илет те — ҫăра пăс кăларать.

— Э, — терĕ вăл, — сывă-и, хĕрĕм! Хăнана килнĕшĕн тавтапуҫ. Мана пулăшăн. Мана, старике, канма та вăхăт. Кил-ха, мана валли вырăн хатĕрле, асту — тӳшеке лайăхрах майла.

Сивĕ Мучи Машука хăй пӳртне чĕнсе кĕртрĕ пек те вырăн майлама хушрĕ пек. Пӳрчĕ унăн пĕтĕмпех пăртан тунăскер. Вырăнĕ ҫинче тӳшек вырăнне кăпăш юр выртать. Старике ҫывăрма ҫемҫерех пул-

тăр тесе, Машук юра кăпкалатма тытăнчĕ. Унăн аллисем кӳтсе, пӳрнисем хĕрелсе кайрĕç.

— Аптрамасть,—тет Сивĕ Мучи,— вăл сывлăхшăн лайăх. Пăх-ха, манăн мĕнле мыскара пур.

Вăл хăйĕн юр тӳшекĕпе утиялне çĕклерĕ те, Машук тӳшек айĕнчен симĕс курăк шăтса тухнине курах кайрĕ. Машук курăка шеллесе илчĕ.

— Эсĕ мĕншĕн симĕс курăка юр тӳшек айĕнче усратăн, ăна кун çути кăтартмастăн?—ыйтрĕ вăл.

— Вăхăт çитмен-ха; курăк вăй илсе çитеймен. Курăк ӳссе кайнă пулсан, ăна хĕл шăнтса пăрахнă пулĕччĕ. Вара вăл çăва тухнă çĕре çитĕнсе çитеймен пулĕччĕ. Çавăнпа та эпĕ çамрăк калчана юр тӳшекпе витсе хутăм. Çуркунне çитсен, манăн юр тӳшек ирĕлсе кайĕ те, калча кун çутине тухĕ. Унтан вара пучах кăларĕ, селĕм ыраш пулĕ. Ахальтен мар: юр хулăн выртсан, тырă нумай пулать, теççĕ.

Çав вăхăтра Машук вăранса кайрĕ.

*В. Одоевский.*

---

Машук тĕлĕкре кама курнă?
Сивĕ Мучин пӳрчĕ мĕнле пулнă?
Машук юр тӳшек айĕнче мĕн курнă?
Юр мĕнле усă кӳрет?

# Предложени хыççăн точкă лартасси.

Çак калава вуласа тухăр.

## Пăр çинче.

Хĕл çитрĕ çанталăк сивĕ тăрать пĕвесем шăнса ларчĕç ачасем конькипе ярăнаççĕ.

Çак калава вулама мĕншĕн йывăр?

Шутласа пăхăр-ха: унта миçе предложени?

Пĕрремĕш предложение вулăр. Кунта мĕн çинчен каланă?

Виççĕмĕш предложенире мĕн çинчен каланă?

Тăваттăмĕшĕнче камсем çинчен каланă?

Ачасем мĕн тăваççĕ?

> Кашни предложение вуланă хыççăн чарăнса тăмалла. Çырнă чух чарăнса тăнине **точкă** лартса паллă тăваççĕ.

«Пăр çинче» калава предложенисем çине уйăрăр, унтан çырса илĕр. Кашни предложени хыççăн точкă лартăр.

«Пирĕн шкул» калава предложенисем çине уйăрăр та çырса илĕр. Предложени хыççăн точкă лартăр.

## Пирĕн шкул.

Пирĕн шкул пысăк унта классем нумай классенче çутă та таса вĕренекенсем кунта йышлă эпир тăрăшса вĕренетпĕр.



## Хӗллехи ир.

Ирхи сивӗ пит-куҫа
Чӗпӗтет те чӗпӗтет.
Уяр, сивӗ сывлăшра
Ҫуна сасси илтӗнет.
Шăннă, пăрлă йывăҫсем
Шавламасăр лараҫҫӗ.
Пас айӗнчи туратсем
Темле мăннăн курнаҫҫӗ.
Ял ҫумӗнчи вăрманта
Кайăк сасси илтӗнмест.
Сумкă ҫакнă шкул ачи
Шкула чупать, ӳркенмест.

*А. Ҫулӗҫ.*

---

Сăвăра ҫанталăк ҫинчен, йывăҫсем ҫинчен, вăрман ҫинчен мӗн калать?

Сăвăри сăмахсемпе усă курса, ҫак предложенисене калаӑа пӗтерӗр.

Ирхи сивӗ... Пăрлă йывăҫсем...
Ҫуна сасси... Кайăк сасси...
Шкул ачи...

## Чӳречерен пăх.

I.

Чӳречерен пăх. Пĕтĕм кантăка шурă тĕрĕсемпе тĕрлесе пĕтернĕ—çакна сивĕ тĕрлесе тухнă. Тулта сивĕ. Пĕтĕм таврана: çĕре те, çурт тăррисене те юр витсе тăрать. Йывăççсем çинче те юр.

II.

Хĕллехи ирпе кил картине тухса пăх. Юр çинче çерçисем сиккелесе çӳреççĕ, тĕпренчĕксене пуçтараççĕ. Сивĕпе вĕсем тĕкĕсене тăратнă, пĕчĕк чăмăрсем пек курăнаççĕ. Çавăнтах ула кураксем уткаласа çӳреççĕ, чанасем кĕшĕлтетеççĕ—мĕн те пулин çимелли шыраççĕ.



III.

Хĕлле ялта, кил-çурт таврашĕнче, урăх вĕçен кайăксене те курма пулать. Яла

кăсăясем те, сыхланулла чакаксем те вĕç-се килеççĕ. Вĕсем валли хĕлле вăрманта апат çук, çавăнпа вĕсем, апат шыраса, пӳрт-çурт çывăхне пыраççĕ!

*Г. Скребицкипе В. Чаплина.*

---

Çак калавра çерçисем çинчен калакан йĕркесене вуласа тухăр.

Çерçисемсĕр пусне эсир пирĕн патăмăрта хĕл каçакан тата мĕнле вĕçен кайăксем çинчен пĕлетĕр?

Çав кайăксем хĕлле мĕншĕн пӳрт-çурт çывăхне вĕç-се пыраççĕ?




## Январь—çулталăк пуçламăшĕ, хĕлĕн варри.

1. Çулталăкри уйăхсен ячĕсене çулталăк пуçламăшĕнчен пуçласа вĕçне çитиччен йĕркипе çырса тухăр.

Çырнă чухне усă курмалли сăмахсем: апрель, март, январь, февраль, июнь, август, май, июль, декабрь, октябрь, сентябрь, ноябрь.

II. Уйăхсен ячĕсене çулталăк хушшисем тăрăх çырса хурăр: хĕлле... çуркунне... çулла... кĕркунне...

### Тупмалли юмах.

Çеçен хир варринче юман,
Ват юманăн вун икĕ турат,
Вун икĕ туратра тăватшар йăва,
Тăватшар йăвара çичшер çăмарта.

(*Çулталăк.*)

## Предложение пысăк саспаллипе пуçласа çырасси.

Çанталăк сивĕтрĕ. Çырмари шывсем шăнчĕç. Хирсем шап-шурă. Урамсене кĕрт хыврĕ. Ачасем çунашкапа ярăнаççĕ.

Предложенири малтанхи сăмаха мĕнле саспаллипе пуçласа çырнă?

Предложени хыççăн мĕн лартнă?

Предложенин малтанхи сăмахне **пысăк саспаллипе** пуçласа çыраççĕ.

«Колхоз хирĕнче» калава вуласа тухăр. Предложенисене уйăрса çырса илĕр. Предложенин малтанхи сăмахне пысăк саспаллипе пуçласа çырма ан манăр.

### Колхоз хирĕнче.

Çанталăк сивĕтрĕ юр нумай çунă колхозниксем хире тухнă вĕсем юр тытаççĕ.

«Юр пукане» ятлă калава вуласа тухăр. Ăçта точкă лартмаллине кăтартса парăр. Пысăк саспаллипе çырмалли сăмахсене кăтартăр. Унтан çырса илĕр.

## Юр пукане.

Çанталăк ăшăтнă нÿрлĕ юр çунă ачасем юртан пукане тунă куçĕсене кăмрăкран тунă.

## Кайăксене ан тытăр.

Пĕрре хĕлле эпир шăллăмпа икĕ кăсăя тытрăмăр. Пÿрте илсе кĕтĕмĕр. Çитерес тесе, кантăр вăрри те паратпăр, çăкăр та паратпăр. Кăсăясем сăхса та пăхмаççĕ. Чĕтресе анчах лараççĕ.

Тепĕр кунне, эпĕ шкултан таврăннă çĕре, ман шăллăм макăрса ларать.

— Мĕн пулчĕ тата?—тесе ыйтрăм.

— Кă-сă-ясем пĕ-ĕт-рĕç!—тесе тата хытăрах уласа ячĕ шăллăм.

— Епле пĕтрĕç?—тетĕп.

— Пĕри çунакан кăмакана вĕçсе кĕрсе вилнĕ, теприне кушак тытса çинĕ,—тет шăллăм.

Кăмăла пит лайăх мар пулса кайрĕ. Ман айăппах пĕтрĕç-çке кусем, тесе шухăшлама пуçларăм. Вĕçен кайăксем пире мĕн чухлĕ усă пани çинчен шкулта вĕрентнисем аса килчĕç. Ӳлĕм нихçан та усăллă кайăксене çапла тытса пĕтермĕп тесе хама хам сăмах патăм.

---

Кăсăясем мĕн пирки пĕтнĕ?

Вĕçен кайăксем этеме мĕнле усă кÿреççĕ?



Çак калава вуласа тухăр.

## Хĕлле.

Хĕлле çанталăк сивĕ. Пур çĕрте те шурă юр выртать. Кайăк сасси илтĕнмест.

Хĕл çинчен хăвăр тата мĕн пĕлнине калăр.

Çак ыйтусем çине ответ парăр. Ответсене тетрадьсем çине çырăр. Çӳле ятне çырса хурăр:

*Хĕлле.*

1. Хăçан çанталăк сивĕ?
2. Пур çĕрте те мĕн выртать?
3. Кайăк сасси илтĕнет-и?



## Хӗл сиввинче.

Январьпе февраль — хаяр сивӗ уйӑхӗсем. Ҫӗре пӑрпа юр хупласа илнӗ. Кайӑксенчен нумайӑшӗ пирӗн патӑртан кӑнтӑрти ӑшӑ ҫӗршывсене вӗҫсе кайнӑ.

Анчах хӗл сиввине парӑнман кайӑксем те пур. Сӑмахран, кукӑр сӑмсасемех ак. Хӗллехи сивӗ вӑрманта вӗсем пӗр-пӗринпе хавас кӑшкӑрашса вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Ват чӑрӑшсем ҫинче пулса ҫитнӗ хӗрлӗрех йӗкелсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Кукӑр сӑмсасем ҫав чӑрӑшсем тӑрне ларса тухаҫҫӗ те йӗкелсен вӑррисене шӗкӗлчеме пикенеҫҫӗ.

6593

## Картинӑсем тӑрӑх предложенисем тӑвасси.



*Ҫак картинӑсене пӑхса тухӑр.*

Пӗрремӗш картинӑ ҫине кама ӳкернӗ? Вӑл мӗн тӑвать?

Иккӗмӗш картинӑ ҫине кама ӳкернӗ? Вӑл мӗн тӑвать?

Виҫҫӗмӗш картинӑ ҫинче кам? Вӑл мӗн тӑвать?



ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКАНСКАЯ БИБЛИОТЕКА им. Гоголя

Çакăнта ӳкернĕ картинăсене пăхса, вĕсем тăрăх пĕрер предложени туса калăр. Çав предложенисене çырса хурăр.

Т ĕ с л ĕ х:

*Ача пулла тытать.*



Çак картинăсем çине мĕн ӳкернĕ?
Йытă мĕн тăвать?
Автан мĕн тăвать?
Кушак мĕн тăвать?

Картинăсем тăрăх предложенисем тăвăр. Вĕсене тетрадьсем çине çырăр.

Йытă... Автан... Кушак...

Х у ш м а л л и с ă м а х с е м:
*вĕрет, авăтать, шăши тытать.*

## Тăвайкки.

Хĕллехи ăшă кун. Каç пула пуçларĕ. Тăвайккине ача-пăча пухăнчĕ. Хăшĕсем çунашкапа, хăшĕсем йĕлтĕрсемпе пыраççĕ. Тăвайккинчен ярăнма тытăнчĕç. Хăйсем кăшкăрашаççĕ, калаçаççĕ, кулаççĕ. Çырма

леш енчи йӑмрасем хушшинчен ача-пӑча сасси янраса илтӗнет.

Хӑш-пӗр чухне пӗр-пӗр ачан ҫунашки тӳнсе каять. Ача юр ӑшне кӗрсе ӳкет. Юлташӗсем ахӑлтатса кулаҫҫӗ. Ытла та аван-ҫке хӗлле тӑвайккинче ярӑнма!

---

Хӑвӑр тӑвайкки ярӑнни ҫинчен каласа парӑр.



**Тӑвайкки ярӑнни.**

Пирӗн ялӑн хыҫӗнче
пысӑк, ҫӳллӗ тӑвайкки.
Хӗл ҫитсессӗн ун ҫинче
камӑн ҫук-ши ҫунашки!
Ак ачасем ту ҫинчен
ҫил пек вӗҫсе анаҫҫӗ.
Ҫырма тӗпне ҫитиччен
ахӑлтатса кулаҫҫӗ.

Çĕрлечченех яранса
ача-пăча савăнать,
Тĕттĕмленсен, васкаса
кашни киле таврăнать.

*С. Çарбай.*

Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Хĕллехи каç.

Хĕвеланăç хĕрелет,
вăш-вăш сивĕ çил вĕрет,
кăпка юра вĕçтерет,
çула тăрăх юхтарать.
Çул хĕрринчи лакăмсем
питĕрĕнчĕç юрпала.
Вăрмансенчи кайăксем
кĕрсе ларчĕç йăвана.
Кĕске хӳре мулкачă
сирпĕнтерчĕ çырмана,
ытла сивĕ тивесрен
кĕрт хушшине пытанма.
Кушак пуçлă тăмана,
ыйăхĕнчен вăранса,
лапăстатрĕ ялалла
чăх-чĕп тавраш шырама.

*Хумма Çеменĕ.*

Хĕллехи каç çинчен сăвăра мĕн каланă?

Хĕллехи каçа хăвăр сăнаса пăхса, ун çинчен каласа парăр.

# Предложенисене сăмахсем çине уйăрасси.

Çак предложенисене сасăпа вулăр.

Сивĕ çил вĕрет.
Йывăççем хумханаççĕ.
Шурă юр вĕçет.
Çанталăксивĕтăрать.
Кайăксемтарсапытаннă.

Мĕншĕн тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш предложенисене вулама йывăр?

Малтанхи предложенире миçе сăмах?
Иккĕмĕш предложенире миçе сăмах?
Виççĕмĕш предложенире миçе сăмах?
Тăваттăмĕш предложенири сăмахсене уйрăммăн калăр.

Пиллĕкмĕш предложенири сăмахсене уйрăммăн калăр. Унта миçе сăмах?

Предложенисем **сăмахсенчен** тăраççĕ. Предложенири кашни сăмаха уйрăм çыраççĕ.

Çак калава çырса илĕр. Малтанхи виçĕ предложенире миçешер сăмах? Ытти предложенисенчи сăмахсен хисепне шутласа тухăр.

## Х ĕ л.

Хĕл çитрĕ. Вăрман çара. Хир шурă. Çил вĕрет. Йывăççене пас тытнă. Мулкач кĕрт хушшине пытанать. Выльăхсем ăшă витере тăраççĕ.




## В. И. Ленин мĕнле вĕреннĕ.

(Ленинăн ача чухнехи пурнăçĕ çинчен унăн аппăшĕ каласа пани.)

Гимназин пĕрремĕш класне Володя тăхăр çул çурăра вĕренме кĕчĕ.

Володя вĕренме юрататчĕ, вăл питĕ лайăх вĕренетчĕ. Пултарулăхĕ унăн пысăкчĕ. Аслă пиччепе аппана вĕрентнĕ пекех, атте ăна тимлĕн вĕренме хăнăхтарнă. Ун çинчен учительсем çапла каланине астăватăп:

— Урок вăхăтĕнче лайăх тăнласа итлесе ларни Володьăна питĕ пулăшать,— тетчĕç вĕсем. Питех те пултаруллăччĕ вăл. Учитель каланине лайăх ăнланса юлатчĕ те килте вара класра вĕреннине унăн кăштах аса илме кăна тиветчĕ.

Володя гимназирен таврăнатчĕ те урокра мĕн вĕренни çинчен аттене каласа паратчĕ. Хăйĕнчен мĕн ыйтни, хăй мĕнле ответ пани çинчен те каласа паратчĕ.

Предметсем, паллах, улшӑнса пыратчӗҫ, анчах паллӑсем яланах пӗр пекчӗ: яланах пӗр паллӑ—пиллӗк пулатчӗ.

*А. Ульянова.*

---

Учительсем В. И. Ленин вӗренни ҫинчен мӗн каланӑ? Гимназире В. И. Ленин мӗнле вӗреннӗ?



## Шкула.

Хӗвел йӑл-йӑл кулчӗ,
пӑхрӗ кантӑкран.
Ванюка вӑл курчӗ,
саврӗ кӑмӑлтан.
Тӑхӑнчӗ, тумланчӗ
Ванюк васкаса,
шкулалла чуптарчӗ
савӑнса, кулса.

*А. Ҫулӗҫ.*

## Пирĕн клас.

Эпир пĕрремĕш класра вĕренетпĕр. Пирĕн клас пысăк та çутă. Клас урайне сарă сăрпа сăрланă. Эпир шкула кĕнĕ чух урасене яланах тасататпăр. Класа çири тумтирсене хывса кĕретпĕр.

Класра виçĕ рет партăсем. Партăсем умĕнче сĕтел ларать. Сĕтел умĕнче учитель валли пукан пур.

Пирĕн класăн чӳречисем пысăк. Чӳречесем çинче чечексем ӳстеретпĕр.

Эпир хамăр класа, хамăр шкула юрататпăр.

* *
*

Пирĕн клас, аслă клас:
вĕренмешкĕн пит хавас.
Класĕ çутă та таса,
вĕренетпĕр савăнса.
Пире валли пурте пур:
хура доска, пурă пур,
кĕнекесем, тетрадьсем,
кăранташĕ, перосем,
шутламалли хатĕрсем.

# Япаласем ҫинчен предложенисем тăвасси.



Класра мĕнле япаласем пур?

Класри кашни япала ҫинчен пĕрер предложени туса калăр.

Тĕслĕх: Класра партăсем пур. Сĕтел партăсем умĕнче тăрать.

## Пирĕн пӳлĕм.



Сирĕн килте мĕнле япаласем пур?

Килти кашни япала çинчен пĕрер предложени туса калăр.

Тĕслĕх: Пирĕн килте диван пур. Сехет стена çумĕнче çакăнса тăрать.

Килти выльăхсем çинчен предложенисем туса калăр. Çав предложенисене тетрадьсем çине çырăр.

Тĕслĕх:




Лаша... Ĕне... Сурăх... Сысна... Йытă... Кушак...

Хушмалли сăмахсем: *кĕçенет, мĕкĕрет, макăрать, нăриклетет, вĕрет, мăрлатать.*

Хăвăр çырнă предложенисене сасăпа вуласа парăр. Кашни предложени хыççăн чарăнса тăрăр.

Килти кайăксем çинчен предложенисем тăвăр Предложенисене тетрадьсем çине çырăр та сасăпа вуласа парăр.

Чăх... Хур... Кăвакал... Кăркка...

Хушмалли сăмахсем: *какалать, какăлтатать, нартлатать, кăлтăртатать.*

## Шанчăклă юлташ.

Ванюк пĕрремĕш класра вĕренет. Вăл кăвак куçлă, сарă ача. Кăмăлĕ унăн çепĕç те ырă. Унăн виçĕ юлташĕ пур: вĕсем Петĕр, Мишă тата Павăл.

Учитель вĕсене киле вулама тата задачă шутлама парса янă.

Ванюк калава хăех вуласа ăнланнă, анчах задачăна шутлайман.

Вара вăл юлташĕсем патне пулăшу ыйтма кайнă. Чи малтан Петĕр патне кĕнĕ. Петĕр задачăна хăй шутланă пулнă, анчах Ванюка шутламан тесе улталанă.

Унтан Мишă патне çитнĕ. Мишă пиччĕшĕ шутласа парасса шаннă. „Пичче шутласа парсан, сана çырса илме парăп",—тенĕ Мишă. Юлашкинчен Ванюк Павăл патне çитнĕ. Павăл ăна задачăна мĕнле шутламаллине йĕркипе ăнлантарса панă.



Ванюк киле тавр̆ансан, ҫак задач̆ана вара х̆ăех тĕрĕс шутланă.

1. Ванюк мĕнле ача пулнă?
2. Унăн юлташĕсем камсем?
3. Вĕсенчен хăшĕ чи шанчăклă юлташ? Мĕншĕн?

## Пĕрремĕш медаль.

Уяв кунĕсенче атте кăкăрĕ ҫине орденсемпе медальсем ҫакать. Ун чухне вăл мана хăйĕн медалĕсемпе выляма та чармасть. Пӳрнепе кăшт тĕкĕнсенех, вĕсем уҫҫăн чăнкăртатаҫҫĕ, хĕвел ҫинче тĕкĕр пек йăлтăртатаҫҫĕ.

Манăн та атте пекех медальсем ҫакса ҫӳрес килет. Эпĕ хам шухăша аттене пĕлтертĕм.

— Пирĕн ҫĕршывра ĕҫе тӳрĕ кăмăлпа лайăх тăрăшса тăвакан ҫынсене мухтаҫҫĕ. Вĕсен ĕҫне орденсемпе медальсем парса хаклаҫҫĕ. Санăн ĕҫӳ халĕ — тăрăшса вĕренесси. Эсĕ халĕ питĕ лайăх вĕренсе пырсассăн, вăтам шкултан Ылтăн медальпе вĕренсе тухма пултаратăн. Вăл санăн пĕрремĕш медаль пулĕ, — терĕ атте.

Эпĕ тăрăшса вĕренетĕп. Манăн медаль пулатех.

*В. Прохоров.*

Пирĕн çĕршывра мĕнле çынсене орденсемпе медальсем параççĕ?

Ача мĕнле çын пулса çитĕнме ĕмĕтленет?

Хăвăр пĕлекен орден е медаль илнĕ çынсем çинчен каласа парăр.

## Сăмах сыпăкĕ.

Çак сăвва пурте пĕр харăс калăр.

Пĕчĕк çеç путене
сарă тулла юратать.

Сăввăн сăмахĕсене çакăнта кăтартнă пек пайласа калăр.

Пĕ-чĕк çеç пу-те-не
са-рă тул-ла ю-ра-тать.
Кол-хоз а-чи, сар а-чи,
пи-о-не-ра ю-ра-тать.
Ю-ра-тать, ю-ра-тать,
пи-о-не-ра çы-рă-нать.

Сăвва пурте пĕр харăс калăр. Сăвă сăмахĕсене çакăнта кăтартнă пек пайласа калăр. Кашни пайне каланă чух алла çупса илĕр.

Пи-о-нер, пи-о-нер,
пур а-ча-шăн пул при-мер!
Çи-рĕп ле-ни-нец пул-ма
тим-лĕн, тим-лĕн вĕ-ре-нер.
Ле-нин ат-те сă-мах-не
от-ряд-сен-че вĕ-ре-нер!

Вуланă чухне сăмахсене **сыпăкăн-сыпăкăн** татса калама пулать. Çак сăввăн сăмахĕсене пурте пĕрле пĕр харăс, сыпăкăн-сыпăкăн татса вулăр.

Лапка, лапка юр çăвать,
мулкач сикет, йĕр тăвать.

* *
*

Касрăм, касрăм пĕрене.
Турăм, турăм шурă пўрт.

Пĕр сыпăклă сăмахсем: юр, хир, çăл, шыв, çип, ял, шкул.

Икĕ сыпăклă сăмахсем: атте, анне, çăкăр, кушак, йытă, автан, вăрман, кăшман.

Виçĕ сыпăклă сăмахсем: кĕнеке, путене, пионер, купăста, вĕрене, пулăçă.

Тăватă сыпăклă сăмахсем: вĕренекен, вĕрентекен, рабочисем, колхозниксем, трактористсем.

Хăш-пĕр сăмахсенче сыпăксем ытларах та пулаççĕ. Сăмахран: çĕн-тер-ӳ-çĕ-сем, пĕ-ле-кен-ни-сем-пе.

Çак сăмахсене вулăр. Вăл сăмахсенче кашнинче миçе сыпăк?

Пўрт, хĕл, хур, пыл, пуç, куç.
Курак, турпас, кашкăр, çарăк.
Кĕркунне, хурама, чўрече, хуралçă.
Кăвакарчăн, молотилкă, саспаллисем.

Çак сăмахсене çырса илĕр. Малтан пĕр сыпăклă сăмахсене çырăр. Унтан икĕ сыпăклă сăмахсене, юлашкинчен виçĕ сыпăклă сăмахсене çырăр.

Лаша, ĕне, сурăх, хăма, хыр, ял, мăйрака, пашалу, çырла, çурт, тунката, кăвакал, чăх, пўрт, ӳпле, кăмака.



## Хĕлип.

(Чăн пулни.)

(Учитель вулать.)

I.

Пĕр ача пуранна. Вăл Хĕлип ятлă пулнă. Пĕрре ачасем пурте шкула кайнă. Хĕлип çĕлĕкне илнĕ те шкула кайма тăнă. Анчах амăшĕ унран ыйтнă: „Хĕлип, ăçта кайма пуçтараннă çак эсĕ?“—тенĕ. „Шкула“,—тенĕ ачи. „Эсĕ халь пĕчĕккĕ-ха. ан кай!“—тенĕ те амăшĕ ăна шкула яман.

Хĕлипĕн ашшĕ çав вăхăтра вăрманта пулнă, амăшĕ ĕçлеме кайрĕ. Пӳртре Хĕлип

тата кӑмака ҫинче выртакан асламӑшӗ ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ. Хӗлипе пӗччен килте ларма кичем. Асламӑшӗ ҫывӑрса кайрӗ. Хӗлип ҫӗлӗкне шырама пуҫларӗ. Хӑйӗнне тупаймарӗ, ҫавӑнпа ашшӗн кивӗ ҫӗлӗкне тӑхӑнчӗ те шкула тухса утрӗ.

Шкулӗ ял вӗҫӗнче пулнӑ. Хӗлип хӑйсен урамӗпе пынӑ чухне ӑна йытӑсем тивмерӗҫ: вӗсем ӑна паллаҫҫӗ. Анчах, урӑх урама ҫитсен, Жучка сиксе тухрӗ, вӗрсе ячӗ. Жучка хыҫҫӑн Улай ятлӑ пысӑк йытӑ сиксе тухрӗ. Хӗлип тарма тытӑнчӗ, йыттисем—ун хыҫҫӑн. Хӗлип кӑшкӑрма пуҫларӗ, такӑнса ӳкрӗ. Пӗр ҫын тухрӗ, йытӑсене хӑваласа ячӗ те ыйтать: „Ӑҫта эсӗ, шӗврешке, пӗччене чупатӑн?"—тет. Хӗлип нимӗн те чӗнмерӗ, малалла питӗ хытӑ чупса кайрӗ.

II.

Вӑл шкул патне чупса ҫитрӗ. Шкул патӗнче никам та ҫук, шалта ачасем шавлани илтӗнет. Хӗлип шикленсе илчӗ: „Е учитель мана хӑваласа ярсан?" Вӑл нимӗн тӑва пӗлмест, шухӑша кайрӗ. Каялла каяс—каллех йытӑсем тапӑнаҫҫӗ, шкула кӗрес—учительтен хӑрать. Шкул ҫумӗпе хӗрарӑм витрепе иртсе пырать. Вӑл ачана:

— Пурте вĕренеççĕ, эсĕ кунта мĕн туса тăратăн?—терĕ. Хĕлип шкула кĕрсе кайрĕ. Çенĕкре вăл çĕлĕкне хыврĕ те алăка уçрĕ. Класра ачасем туп-тулли. Варринче учитель çӳрет.

— Эсĕ мĕн кĕмесĕр тăратăн?—терĕ вăл, Хĕлип еннелле çаврăнса. Хĕлип çĕлĕкне тытнă та нимĕн те шарламасть.—Кам вара эсĕ?—Хĕлип чĕнмест.—Чĕлхесĕр-им эсĕ?—Хĕлип çав тери хăраса кайнă, калаçма та пултараймасть.—Калаçассу килмест пулсан, киле кай эппин.



Хĕлипĕ тем пекех калаçĕччĕ, анчах унăн хăранипе пырĕ типсех ларнă. Вăл учитель çине пăхрĕ те йĕрсе ячĕ. Вара учитель ăна шеллерĕ. Вăл ăна пуçĕнчен ачашласа илчĕ. Хĕлип кам ачи иккенне ачасенчен ыйтса пĕлчĕ.

— Вăл Хĕлип, Кĕçтенкки шăллĕ. Тахçанах шкула килесшĕн вăл, анчах амăшĕ ямасть ăна. Халь шкула вăрттăн килнĕ,— терĕç ачасем.

— Ну, кĕрсе лар пиччŭпе юнашар, сана шкула яма аннŭпе калаçса пăхăп,—терĕ учитель.

III.

Учитель Хĕлипе саспаллисем кăтартать. Хĕлипĕ вĕсене тахçанах паллать-ха, вулама та кăшт пĕлет.

— Ну-ка, саспаллисем хурса, хăвăн ятна ту-ха.

— Хĕ-хĕ-лĕ-и-лип.

Пурте кулса ячĕç.

— Маттур,—терĕ учитель.—Кам сана вулама вĕрентнĕ-ха?

Хĕлип хăюланса кайрĕ те калать:

— Кĕçтенкки! Эпĕ маттур, эпĕ тŭрех пурне те ăнлантăм, эпĕ пултаратăп!—тет.

Учитель ăна пӳлчĕ.

— Эсĕ мухтанма тăхта-ха, малтан вĕрен, — терĕ вăл.

Çавăнтан вара Хĕлип ачасемпе пĕрле шкула çӳреме тытăнчĕ.

*Л. Толстой.*

---

Ку ĕç хăçан пулнă?
Хĕлип мĕншĕн шкула каясшăн пулнă?
Хĕлип вĕренесшĕн пулни ăçтан курăнать?
Хĕлип учителе хăй çинчен мĕн-мĕн каласа панă?
Хăвăр чи малтан шкула кайни çинчен каласа парăр.

Ваттисен сăмахĕ.

*Вĕренни — çутă, вĕренменни — тĕттĕм.*

## Сыпăксенчен сăмахсем тăвасси.

Кунта икĕ сыпăклă сăмахсен малтанхи сыпăкне панă. Тепĕр сыпăкне тупса сăмах тăвăр.

| | | |
|---|---|---|
| ха- | та- | çу- |
| ку- | çыр- | йы- |

Тĕслĕх: ха-чă.

Ҫунта икĕ сыпăклă сăмахсен юлашки сыпăкне панă. Малтанхи сыпăкне тупса сăмах тăвăр.

-та　　-ча　　-ка

-ра　　-ша　　-на

Т ĕ с л ĕ х: кар-та.

Ҫакăнта панă сăмах сыпăкĕсенчен сăмахсем тăвăр.

　　-ке　　　　у
ӳп -ле　　　　ша　　-па
　　-ре　　　　ар

Панă сыпăксенчен сăмах тума пулать.

Пушă тăваткăлсем вырăнне аяларах кăтартса панă сăмах сыпăкĕсене каласа сăмахсем тăвăр. Ҫав сăмахсене çырăр.

ка☐　☐лă

Сăмах сыпăкĕсем: пан, лав, нав, ку, су, ту.

Ҫак тăваткăлсенчи сăмах сыпăкĕсене суйласа илсе сăмахсем тăвăр. Вăл сăмахсене çырăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| та | ça | ман | ва |
| ар | ка | кăм | ма |
| çыр | кан | ла | па |

| | | | |
|---|---|---|---|
| пах | пак | кăр | кай |
| кал | ча | ка | лав |
| шал | та | тăр | ла |

Т ĕ с л ĕ х:

*така, çырла.*




## Пирĕн çемье.

Пирĕн çемье пысăк мар. Çемьере пилĕк çын пурăнать. Атте, анне, пичче, эпĕ тата йăмăк. Аттепе анне колхозра ĕçлеççĕ. Пичче манран виçĕ çул аслă. Вăл тăваттăмĕш класра вĕренет. Ăна Витя тесе чĕнеççĕ. Витя мана кĕнеке вулама, задачă шутлама пулăшать.

Йăмăк Верук ятлă. Вăл пилĕк çулта кăна-ха. Верук пуканесемпе выляма юратать. Эпĕ кĕнеке тытса ларсанах, вăл ман çума пырса ларать. Манран картинăсем кăтартма ыйтать.

Пирĕн çемье туслă. Эпир пурте пĕрпĕрне юрататпăр, атте-анне каланине яланах итлетпĕр.

---

Хăвăр çемье çинчен каласа парăр.

## Пуринчен те лайăххи.

Урамра, халăх хушшинче çӳресе, пĕчĕк çеç хĕрача аташса кайнă. Унталла та кунталла чупкалать, йĕрет, кăшкăрать, амăшне шырать. Çынсем унран ыйтаççĕ: „Мĕнлескер вара санăн аннӳ?"—теççĕ. „Пĕлместĕр-им эсир? Манăн анне пуринчен те лайăххи",—тет хĕрача ĕсĕклесе.

*Л. Толстой.*

---

Хĕрача мĕншĕн хăйĕн амăшне пуринчен те лайăх тесе шутлать?

## Ваттисен сăмахĕ.

Аçу-аннӳне хисепле, хăвнах ырă пулĕ.

## Сăмахсене сыпăксем çине уйăрса çырасси.

Çак калава вуласа тухăр. Вуланă чухне сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса калăр. Унтан сыпăксене кĕске йĕрпе уйăрса çырса илĕр.

## А с а т т е.

Нина шкултан таврăннă. Килĕнче аслашшĕ пулнă. Нина ăна кĕнеке вуласа панă. Аслашшĕ савăнса итлесе ларнă.

---

Çак сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн кĕске йĕрпе уйăрса çырса илĕр.

Атте, анне, асатте, асанне, пичче, шăллăм, аппа, йăмăк, сĕтел, пăчкă, пуртă, пукан, укçа, коньки, йĕлтĕр, тараса, витре, кĕвенте.

Тĕслĕх:

*конь-ки.*

## Тав.

Манăн пичче хулара пурăнать. Кашни çулах çуллахи вăхăтра вăл пирĕн патăрта канать. Яланах парнесем илсе килет. Кăçал та вăл мана хитре ӳкерчĕклĕ кĕнеке пачĕ. Эпĕ савăннипе парнене хăвăртрах аттепе аннене кăтартмаваскарăм.

Атте мана:

— Парне илсен, тав тăвас пулать,— терĕ.

— Пысăк тав сана, пичче,—терĕм эпĕ.

— Тĕрĕс, йĕркеллĕ ача çынсене яланах тав тăвать,—терĕ пичче, мана мухтаса.

Эпĕ халĕ нихçан та тав тума манмастăп.

*В. Прохоров.*

---

Ача пиччĕшне тав туса мĕнле каланă?

Эсĕ те хăвна пулăшсан, япаласем парсан, çынсене, юлташусене тав тума ан ман.

## Сентти.

Чипер ача Сентти пур,
чупса çӳрет урамра.
Кĕвентине утланса,
ача вылять лашалла.

Чипер ача Сентти пур,
чупса килет лашипе.
Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
пакăлтатать инкĕшпе.

Кĕвентине утланса,
инкĕш патне çĕмĕрсе
кĕрсе кайрĕ ахăрса.
Çапать паттăр лашине
хăй аллинчи хуллипе.

*К. Иванов.*

---

Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Шăллăм.

Манăн шăллăм пур. Вăл манран пĕр çул кăна кĕçĕн. Кăçал эпĕ пĕрремĕш класра вĕренме пуçларăм. Шăллăм та манпа шкула пырасшăнччĕ. Учитель ăна, çамрăк тесе, вĕренме илмерĕ.

Çапах та шăллăм манран юласшăн мар. Эпĕ кĕнеке вуланă чухне вăл манпа

пĕрлех вулама пикенет. Хăй пĕлмен саспаллисене манран ыйтать. Халĕ шăллăм вуннă таран шутлама та пĕлет ĕнтĕ. Часчасах эпĕ ăна шкулта мĕн вĕренни çинчен каласа паратăп. Вăл мана савăнсах итлет.

Пĕррехинче эпĕ аттене шăллăм умĕнче:

— Паян эпĕ „пиллĕк" паллă илтĕм,— терĕм.

Шăллăм эпĕ каланине итлесе тăрать.

— Атте, мана кăçал шкула илнĕ пулсан, эпĕ те „пиллĕк" паллăпа кăна вĕреннĕ пулăттăм,—терĕ вăл.

*В. Прохоров.*

---

Санăн шăллу пур-и?
Вăл миçе çулта?
Вăл хăçан шкула çӳреме пуçлать?

## Манăн анне.

(Вĕренекен ача каласа пани.)

Манăн анне колхоз ферминче ĕçлет, пăрусем пăхать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çулсеренирттерсе тултарнăшăн ăна кашни çулах ĕç кунĕсем хушса параççĕ.

Кăçал аннене хисеп грамоти пачĕç. Грамотă пана кунне пирĕн пата юлташĕсем пуçтарăнчĕç, пурте аннене саламларĕç.

Аннепе чухне пире яланах лайăх, хавасл. Пирĕн килте вăл хĕвел пекех.

Анне пире ĕçчен пулма вĕрентет. Эпĕ шкултан начар паллă илсе таврăнсан е хам япаласене пўртре сапаласа пăрахсан, вăл ман çине тинкерсе пăхать те, мана намăс пулать.

Анне мана çапла калать:

— Лайăх, тўрĕ кăмăллă пулса çитĕн, кашни ĕçех лайăххрах тума тăрăш,—тет.

Эпĕ вара чăнах та тăрăшатăп.

---

Çак ачан амăшĕ ăçта ĕçлет?
Вăл мĕнле ĕçлет?
Хăвăр аннĕр çинчен каласа парăр.

## Сăпка юрри.

Пĕчĕк ывăлăмçăм, çывăр,
тутлă тĕлĕк кур.
Ўсĕн эс паттăр та сывă,
çитĕнĕн маттур,
Ĕмĕтсем тасçтах вĕçеççĕ
питĕ инçене.
Пулăн эс, ачам, вĕçевçĕ,
пулăн инженер.
Çитĕн эс сив тинĕс урлă
çурçĕрĕн вĕçне.

Сан ҫинчен пин юрӑ юрлӗҫ,
ырлӗҫ сан ӗҫне.

*П. Хусанкай.*

---

Ывӑлӗ ҫинчен амӑшӗ мӗн ӗмӗтленнине каласа парӑр.

## Картинӑ тӑрӑх ӗҫлесси.



Картинӑна пӑхса тухӑр.
Картинӑ ҫине камсене ӳкернӗ?
Пурӗ миҫе ача?
Ачасене камсем пӑхаҫҫӗ?
Ачасем мӗн тӑваҫҫӗ?
Картинӑна ят парӑр.

## Сӑмаха пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарасси.

Ҫырнӑ чухне сӑмах пӗр йӗркене вырнаҫмасан, унӑн ҫав йӗркене кӗмен сыпӑкне **тепӗр йӗркене куҫарса** ҫыраҫҫӗ.

Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухне **кĕске йĕр** (-) лартаççĕ.

Сăмахсене **сыпăкăн-сыпăкăн** çеç куçараççĕ:

| | |
|---|---|
| *ар-ман* | *кă-вак* |
| *чӳ-рече* | *кăва-кал* |
| *чӳре-че* | *пах-ча* |

Сăмах пуçламăшĕнче пĕр саспаллиллĕ сыпăк пулсан, ăна малтанхи йĕркене **уйăрса хăвармаççĕ:**

*ура-па*, *асат-те*, *упă-те*

Сăмах вĕçĕнче пĕр саспаллиллĕ сыпăк пулсан, ăна **тепĕр йĕркене куçармаççĕ:**

*кă-сăя*, *ра-дио*, *туя*, *каю*...

Çак сăмахсене çырса илĕр. Пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухне вĕсене мĕнле куçармаллине кĕске йĕрпе кăтартăр.

Улма, вăрман, сăвă, сулă, хурăн, сухан, алса, пальто, машинă, учитель, шăши, çава, коньки, хăяр, юлташ, фермă.

Ç а п л а ç ы р ă р:




Çак сăмахсене çырса илĕр. Вĕсене мĕнле куçармаллине кĕске йĕрпе кăтартăр.

Сывлăш, çырла, çуна, пăру, халап, пăрăç, чăлха, укăлча, мунча, турат, тиха, эрне, çăка, купăста, çумăр, кĕтӳ, ĕне, сурăх, ăман.

## Юратнӑ йӑмӑкӑм.

Манӑн пилӗк çулхи йӑмӑк пур. Ӑна Роза тесе чӗнеççӗ. Вӑл пукане пек хитре. Çӳçӗсем унӑн сап-сарӑ, куçӗсем—кӑвак, пичӗ хӑмла çырли пек. Вӑл чӗкеç чӗлхи пек çепӗççӗн калаçать. Эпӗ ӑна питӗ юрататӑп.



Эпӗ шкултан таврӑнсан, ӑна интереслӗ кӗнекесем вуласа паратӑп. Вӑл мана тимлӗн итлесе ларать, ӳкерчӗксем кӑтартма ыйтать Эпӗ кӗнекери ӳкерчӗксене çавӑнтах кӑтартатӑп.

Роза вӗсем ҫине нумай вӑхӑт хушши тинкерсе пӑхать. Вӑл хӑй те ӳкерчӗксем тума пикенет. Выляма яланах хампа пӗрле илсе ҫӳретӗп. Никама та кӳрентерме памастӑп. Хӗллехи вӑхӑтра эпир ҫунашкапа ярӑнатпӑр, ҫулла лашалла, пытанмалла вылятпӑр.

Киле иккӗнех юлсан, эпӗ ӑна тӑрӑшса пӑхатӑп: апат ҫитеретӗп, чей ӗҫтеретӗп. Ыйхи килсен, ҫывӑрма та выртталатӑп.

---

Ача хӑй йӑмӑкне юратни ҫинчен, ыттисем килте ҫук чухне ӑна пӑхни ҫинчен каласа парӑр.

## Манӑн юлташ.

Хампа тантӑш Петӗрпе
Эп пурнатӑп юнашар,
Конькипе те йӗлтӗрпе
ярӑнатпӑр сахал мар.

Ҫулла пулсан, пахчана
ҫум ҫумлама ҫӳретпӗр,
Шӑрӑх чухне ҫырмана
Шыва кӗме вӗҫетпӗр.

Вӗренме те пӗр-пӗрне
Пулӑшатпӑр тӑтӑшах.

Атте-анне сăмахне
Хисеплетпĕр яланах.

*С. Юшков.*

## Манăн ывăлăм.

(Олег Кошевой çинчен амăшĕ каласа пани.)

Манăн Олег ывăлăн Гриша ятлă юлташĕ пурччĕ. Олегпа Гриша кунĕ-кунĕпе пахчара вылятчĕç. Гришăн амăшĕ час-часах чирлетчĕ. Ашшĕ унăн çукчĕ, Гришăн пурнăçĕ йывăрччĕ.

Майăн пĕрремĕш кунĕ тĕлне эпĕ Олега икĕ çĕнĕ кĕпе çĕлесе патăм: ахаль кĕпе тата матроскă. Олег матроскăна питĕ килĕштерчĕ. Пĕр ирхине вăл ман пата пычĕ те çапла каларĕ:

— Аннем, манăн халĕ икĕ кĕпе, Гришăн пĕр кĕпе те çук. Матроскине Гришăна парăпăр,—терĕ.

Эпĕ матроскăна хутпа чĕркерĕм те, Олег ăна хавассăн юлташне пама илсе кайрĕ.

---

Олегăн юлташĕ кам пулнă?

Олегпа Гриша пĕр-пĕринпе мĕнле пурăннă?

Олега мĕн пирки лайăх юлташ теме пулать?

Калавра Олег лайăх пулнине кăтартакан йĕркесене тупăр.

## Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçармалли хăнăхтарусем.

Çак предложенисене çырса илĕр. Сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр.

Мăкăнь пахчара ÿсет. Вальăн кĕнеке пур. Аллусене супăньпе çу. Мăрьене кирпĕчрен тăваççĕ. Шăлаварăн икĕ кĕсъе.

Çак калава çырса илĕр. Сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр.

### К и л т е.

Каçхине пирĕн çемье пуçтаранчĕ. Атте хаçат вулать. Анне кĕнеке вулать. Эпĕ уроксене вĕренетĕп. Йăмăк пуканепе вылять.

### Эпĕ те колхозра ĕçлетĕп.

Манăн аттепе анне колхозра ĕçлеççĕ. Атте колхоз лашисене пăхать, анне уй ĕçĕсене тăвать.

Çуллахи вăхăтра эпĕ те аннепе пĕрле колхоза ĕçлеме çÿреттĕм. Сакăр çула кайнă пулин те, унта ман валли ĕç яланах тупăнатчĕ. Çум çумлама пулăшаттăм. Атте туса панă пĕчĕк кĕреплепе утă та

хускататтăм. Тепĕр чухне тарăн варти çăлтан колхозниксем валли сивĕ шыв илсе пыраттăм.

Колхозниксем çакăншăн мана тав тăватчĕç.

Ача çулла мĕн ĕçленĕ?

Колхозниксем ачана мĕншĕн тав тунă?

Хăвăр колхозра ĕçлени çинчен каласа парăр.



## Ф е р м ă р а.

Эп çӳретĕп кулленех
Пирĕн сурăх фермине.
Эпĕ унта çитсенех
Пулăшатăп аннене.

Ман анне кунта ĕçлет—
Ик çĕр сурăх ӳстерет.

Вăхăтра вăл шăварать,
вăхăтра апат парать.

Унăн кăкăрĕ çинче
Йăлтăрти медаль те пур.
Çав хитре медаль çинче
Мăлатук, çурла та пур.

*В. Алендей.*

---

Ачан амăшĕ ăçта ĕçлет?
Вăл мĕнле ĕçлет?
Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Карчăк.

Урамра арçын ачапа хĕрача пынă. Вĕсен умĕнче пĕр карчăк утса пынă. Çул пăрлă пулнă. Карчăкăн ури шунă та вăл ӳкнĕ.

— Манăн кĕнекесене тыт-ха!—тенĕ те арçын ача, сумкине хĕрачана тыттарнă. Вăлваскаса карчăка пулăшма чупнă. Арçын ача карчăка ура çине тăма пулăшнă та каялла хĕрача патне пынă. Хĕрача унран ыйтать:

— Ку санăн асаннӳ-им?—тет.

— Çук,—тет ача.

— Аннӳ-и?—тĕлĕнсе ыйтать хĕрача.

— Çук,—тет ача.



— Апла пулсан, палланӑ ҫын пулĕ?

— Ҫук! Ҫук!—тет ӑна хирĕҫ ача.— Вӑл пачах палламан карчӑк.

*В. Осеева.*

---

Шкул ачи карчӑка мĕнле пулӑшу панӑ?

## Пысӑк ĕмĕт.

Ҫакӑ Аслӑ Ҫĕршывра,
ирĕк, савӑк пурнӑҫра,
ыр курса эпир ӳсетпĕр,
ҫĕн хунав пек ешеретпĕр.
Вĕренме ҫулсем ҫитсен,
ĕҫлеме ҫулсем ҫитсен,
пулӑпӑр ялан ĕҫчен!
Аттесем те аннесем—

пирӗншӗн нихҫан вӗсем
намӑсланмӗҫ ҫӗр ҫинче!

*А. Галкин.*

## Сасӑсем.



**Верук чашӑк ҫӑвать.**

Ҫак предложенире миҫе сӑмах?

Малтанхи сӑмахне калӑр. Вӑл сӑмахра миҫе сыпӑк?

Малтанхи сыпӑкне калӑр.

Иккӗмӗш сыпӑкне калӑр.

***Ве*** сыпӑкра миҫе сасӑ? Сыпӑкӑн пуҫламӑшӗнче мӗнле сасӑ? Иккӗмӗшӗ мӗнле сасӑ?

***-рук*** сыпӑкра миҫе сасӑ? Сыпӑкӑн пуҫламӑшӗнче мӗнле сасӑ? Иккӗмӗшӗ мӗнле сасӑ? Виҫҫӗмӗшӗ мӗнле сасӑ?

Каласа парӑр:

**Верук** сӑмахра пурӗ миҫе сасӑ?

**Чашӑк** сӑмахра пурӗ миҫе сасӑ?

**Ҫӑвать** сӑмахра пурӗ миҫе сасӑ?

Сӑмахсем **сасӑсенчен** пулаҫҫӗ. Ҫырнӑ чухне сасӑсене **саспаллисемпе** паллӑ тӑваҫҫӗ.

Çак сăмахсене вуласа тухăр. Унтан каласа парăр. Тулă. Ĕне. Кĕпер. Кушак. Купăста. Çăкăр. Пӳрт.

***Тулă*** сăмахра миçе сыпăк? Пĕрремĕш сыпăкне калăр. Иккĕмĕш сыпăкне калăр.

***Ту*** сыпăкра миçе сасă? Малтанхи сасса калăр. Иккĕмĕш сасса калăр.

***-лă*** сыпăкра миçе сасă? Малтанхи сасса калăр. Иккĕмĕш сасса калăр.

***Ĕне*** сăмахра миçе сыпăк? Малтанхи сыпăкне калăр. Иккĕмĕш сыпăкне калăр.

Пĕрремĕш сыпăкра миçе сасă? Ана калăр.

***-не*** сыпăкра миçе сасă? Малтанхи сасса калăр. Иккĕмĕш сасса калăр.

***Кĕпер*** сăмахра миçе сыпăк? Малтанхи сыпăкне калăр. Иккĕмĕш сыпăкне калăр.

***Кĕ*** сыпăкра миçе сасă? Малтанхи сасса калăр. Иккĕмĕш сасса калăр.

***-пер*** сыпăкра миçе сасă? Пĕрремĕш сасса калăр. Иккĕмĕш сасса калăр. Виççĕмĕш сасса калăр.

***Тулă*** сăмахра миçе сасă? Вĕсене уйăраммăн каласа тухăр. ***Ĕне*** сăмахра пурĕ миçе сасă? Вĕсене уйăраммăн каласа тухăр. ***Кĕпер*** сăмахра миçе сасă? Вĕсене уйăраммăн каласа тухăр.

Çак сăмахсене икшерĕн вулăр. Вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйăрлса тăраççĕ. Унтан çырса илĕр.

Хыр—хур. Çуна—туна.
Çăл—шăл. Лав—тав.

Вăкăр—çăкăр.
Турат—турам.

Çак тупмалли юмаха çырса илĕр.

# Тупмалли юмах.

*Пĕчĕкскер, хăйтрескер,*
*çĕр мăкăрттса тухнăскер,*
*пурçăн тутăр çыхнăскер.*

(*Кăмпа.*)

Каласа парăр:

**Тутăр** сăмахра миçе сасă? Мĕнле сасăсем?
**Пурçăн** сăмахра миçе сасă? Мĕнле сасăсем?




## Совет Çарĕ.

Февралĕн 23-мĕшĕ — Совет Çарĕн уявĕ.

Совет Çарĕ пирĕн Тăван çĕршыва хӳтĕлет, пирĕн чикĕсене тăшмансенчен сыхлать.

Вăл нумай тăшмансене çапа-çапа çĕмĕрнĕ. Чи йывăрри нимĕç фашисчĕсене хирĕç вăрçнă вăрçă пулнă. Фашистсем Совет влаçне пĕтерсе хума шутланă. Вĕсем пĕтĕм тĕнчене хăйсен аллине çавăрса илесшĕн пулнă. Пирĕн Тăван çĕршыври рабочисемпе хресченсене чурасем туса хума шутланă. Фашистсем пирĕн нумай хуласемпе ялсене ишсе пĕтернĕ.

Пĕтĕм совет халăхĕ фашистсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленчĕ. Пирĕн салтаксем хăюллă çапăçрĕç. Маттур моряксем тăшмана тинĕсре çĕмĕрчĕç. Вĕсен карапĕсемпе тинĕс тĕпĕнче çӳрекен киммисене путарчĕç.

Совет Çарне пĕтĕм халăх пулăшса тăчĕ. Рабочисем заводсенче хĕç-пăшалсем, машинăсем турĕç. Колхозниксем вара çар валли тыр-пул туса пачĕç. Пирĕн çар фашистсене çапса аркатрĕ. Совет Çарĕ пирĕн çĕршыва тăшмансенчен хăтарчĕ тата вĕсен тĕп хулине — Берлина йышăнчĕ.

Эпир пурте Совет Çарне юрататпăр.



Праçниксенче Мускаври Хӗрлӗ площаде Совет Çарӗсем парада тухаççӗ. Ретӗн-ретӗн çуран çар иртет. Вӑйлӑ танксем кӗмсӗртеттерсе иртеççӗ. Сенкер пӗлӗтре хӑватлӑ самолётсем вӗçеççӗ, истребительсем çиçӗм пек хӑвӑрт вӗлтлетсе иртеççӗ.

Совет Çарне!

Чаплӑ Совет Çарне мухтав!

**Паттӑр салтак.**

(Учитель вулать.)

Пин те тӑхӑр çӗр хӗрӗх виççӗмӗш çул пулнӑ. Нимӗç фашисчӗсем Ленинград хулине йӗри-тавра хупӑрласа тӑнӑ. Совет Çарӗ Ленин хулине питӗ хӑватлӑн хӳтӗленӗ.

Çакӑнта, Ленинград патӗнче, чӑваш ачи Иван Михайлов паттӑр ӗç тунӑ. Çак салтак пирӗн Чӑваш çӗршывӗнче, Сӗнтӗрвӑрри районӗнче çуралса ӳснӗ.

Пĕр вăйлă çапăçу пынă. Иван Михайловпа ытти совет салтакĕсем тăшман çине хыттăн тапăнса пынă. Анчах тăшман парăнасшăн пулман, вăл пирĕн салтаксем çине пулемĕтран тăхлан çумăр çутарнă.

Совет салтакĕсем малалла каяйман, выртма тивнĕ. Вилекенсемпе аманакансем йышлансах пынă. Çакна нимрен хăраман Иван Михайлов урăх тӳссе выртма пултарайман. Вăл хăвăрттăн юр ăшĕпе малалла шуса кайнă. Ун умĕнче тимĕр-бетонпа çирĕплетсе тунă çĕр пӳрт пекскер ларнă, ун пĕр чӳречинчен çулăм тухса тăнă: ку пĕрмай пулемĕт пенипе çапла курăннă. «Акă сĕмсĕр пирĕн çула пӳлекен. Ана пула миçе совет салтакĕ вăхăтсăр пуçне хучĕ. Кĕçех эсĕ те калаçма чарăнăн. Ме, манăн юнăмпа чыхăн!»— тенĕ те хăвăрттăн ыткăннă. Вăл часах хăйĕн кĕлеткипе пулемĕт перекен чӳречене пырса хупланă. Унăн чĕри витĕр темиçе пульă шăтарса тухнă та, пулемĕт та çавăнтах пеме чарăннă.

Пирĕн салтаксем Михайловăн паттăрлăхне кура çавăнтах сиксе тăнă та тăшман çине ура! кăшкăрса ыткăннă. Часах фашистсене аркатса тăкнă.

Пирĕн янташа, паттăр Иван Михайлова, çав вырăнтах чысласа пытарнă. Унăн мухтавлă ятне совет халăхĕ нихçан та манмĕ.

*М. Румянцев.*

**Ăшă салам.**

Лартрăм эпĕ ик пукан.
Мĕн тăван? Хăвах куран.
Ку халь пулчĕ пăравус.
Машинист, пуçна ан ус!
Ик пукан çине ларса,
пăравус пек кăшкăртса,
кайрăм питĕ инçене,
Хура тинĕс хĕррине.
Ман пичче кунта, флотра.

Ман пичче маттур моряк.
— Сывă-и, пиччем, сана
курас килчĕ чунтанах.
Малтанах çакна калам:
йышăн чи ăшă салам.
Аттерен те, аннерен,
юратнă асаттерен,
хамăн ĕçчен аппаран
тата пĕчĕк шăллămран.
Çĕршыва куç пек сыхла,
сыхă пул, пиччем, ялан.

*В. Алендей.*

---

Ача мĕнле вăйă вылянă?
Хăйĕн пиччĕшне вăл мĕнле саламласшăн?
Пиччĕшне вăл мĕн хушасшăн?

## Япалана пĕлтерекен сăмахсем.

Çакăнта ўкернĕ япаласен ячĕсене каласа парăр.






Автан, чăхă, çĕçĕ, чашăк, мулкач, сысна, çăра, кĕреçе — пурте **япаласем.** Кашни **япалан** хăйĕн **ячĕ** пур.

Çак япаласен ячĕсене картинă çинчи йĕркепе каласа тухăр.



### Вылямалли япаласем.

Арман, коньки, пӳске, кимĕ, параппан, шар, упа, ункă, ухă, çунашка, пукане, йĕлтĕр.

Çак калава вулăр.

### Шкул ачине кирлĕ япаласем.

Сашук ашшĕ виçĕ тетрадь, кĕнеке, кăранташ, ручкă, перо, сумкă тата пенал илнĕ. Çаксене пурне те вăл Са-

Сашука панă та çапла каланă: «Ывăлăм, çак япаласемпе эсĕ шкула çӳрĕн, тăрăшса вĕрен»,— тенĕ.

---

Сашукăн шкула кайма мĕнле япаласем пур?
Санăн шкулта вĕренме кирлĕ мĕнле япаласем пур?
Тата мĕнле япаласем кирлĕ пек сана?
Калавран вĕренмелли япаласен ячĕсене çырса илĕр.

Тупмалли юмах.




(*Кĕнеке страници.*)

Çакăнта ӳкернĕ япаласен ячĕсене йĕркипе каласа тухăр, вĕсен айне çырнă сăмахсене вулăр.



*Сĕтел.* *Кĕрĕк.* *Тăлăп.* *Кровать.*



*Диван.* *Кĕпе.* *Этажеркă.* *Саппун.*



*Пальто.* *Çĕлĕк.* *Картус.* *Тутăр.*

Çак сăмахсене çапла уйăрса çырса илĕр.
Сĕтел-пукансем: сĕтел, кровать...
Тумтирсем: кĕрĕк, тăлăп...
Çак çырласен ячĕсене çырса илĕр.



*Пилеш.* *Çĕмĕрт* *Йĕплĕ çырла.*



*Хăмла çырлы.*



*Сливă.*



*Чие çырли.*



*Палан.*



*Хурлăхан.*



*Хурăн çырли.*

Çапла çырăр:

*Çырласем: пилеш, çĕмĕрт...*

Килте çак пахча çимĕçĕсен ячĕсене çырса илĕр.

**Пахча çимĕçĕсем.**

Купăста, хăяр, çарăк, кишĕр, çĕр улми, кăшман, сухан, ыхра.

Тупмалли юмахсем:

Хăй пин хут кĕпепе, анчах хĕлле шăнать. (Купăста.)

Пĕчĕк кăна аппа пур, куçран пăхсан макăртать. (Сухан.)

Кĕме-тухма шăтăк çук, пӳртре пин çын пурăнать. (Хăяр.)

Хăй шалта, çӳçĕ тулта. (Кишĕр.)

## Йытă — санитар.

(Учитель вулать.)

I.

Вăрманта çапăçу пынă.

Вăрман хĕрринчен инçех те мар, хирте йывăр суранланнă салтак выртнă.

Салтак юн кайнипе аптраса çитнĕ. Вăл ăçта вырт-нине никам та пĕлмен.

Сасартăк суранлă çын хăй умĕнчех такам йывăррăн сывланине илтет. Вăл куçне уçса пăхать. Унран икĕ утăмра пысăк çăмламас йытă тăра парать.

Унăн мăй çыххи çинче темĕнле йывăç патак çакăнса тăрать.

Суранлă çын хавасланса кайрĕ. Халь ĕнтĕ вăл пĕччен мар!

Йыттăм! Кунта, кунта!— чĕнчĕ вăл йытта.

Йытти кăмăллăн хӳрине пăтратса илчĕ. Унтан вăл мăй çыххи çинчи патака хыпса илчĕ те каялла çаврăнса чупрĕ.

— Эх! Кайрĕ...—ассăн сывласа илчĕ те суранлă çын куçне хупрĕ.

II.

Йытă кĕçех каялла таврăнчĕ. Анчах пĕччен мар!

Вăл хăйпе пĕрле икĕ çынна илсе килчĕ. Кусем çар санитарĕсем пулнă. Çак санитарсем йытта суранланнă салтаксене шырама янă пулнă.



Йытă салтак патне чупса пычĕ. Ăна питĕнчен çуласа илчĕ. Вара салтак йытта ăшшăн ачашларĕ.

— Манăн сумкăра шоколад пур. Ăна илĕр те йытта парăр. Вăл, мана тупса, манăн пурнăçăма çăлчĕ,—терĕ.

Санитарсем суранлă çыннăн суранĕсене çыхрĕç те ăна лазарета ăсатрĕç. Лазаретра вăл сывалчĕ. Çапла майпа йытă суранлă çынна вилĕмрен хăтарчĕ.

III.

Йытă суранлă çынна тупнине санитарсем мĕнле пĕлнĕ-ха? Патак тăрăх иккен. Йытă патака çыртса каялла таврăнать пулсан, паллах, вăл кама та пулин тупнă. Çавăн пек вĕрентсе çитернĕ ăна.

Аçта вĕрентнĕ-ха çав йытта?

Ленинградра тĕлĕнмелле шкул пур. Çав шкулта вĕренекенсем çырма-вулама пĕлмеççĕ, вĕсен кĕнеке, тетрадь тавращĕ çук. Çав вĕренекенсем — ахаль йышши йытăсемех, кил сыхлакан йытăсем.

Вĕсене çапăçу вăхăтĕнче суранланнă çынсене шыраса тупма виçĕ уйăх хушши вĕрентеççĕ.

Çав йытăсене санитар-йытăсем теççĕ. Вĕсем пăшал пенинчен хăрамаççĕ, ют çын вĕсене хăйсен çулĕнчен пăрса яма пултараймасть.

Санитар пулма кашни йыттах илмеççĕ, йăвашшисене, ачашраххисене çеç суйласа илеççĕ. Хаярри, çыртаканни суранланнă çынна хăратма, çыртса илме те пултарать.

Çăмламас санитарсем вăрçă вăхăтĕнче сахал мар çынна вилĕмрен хăтараççĕ.

**Мир пурнăçа! Вилĕм вăрçа!**



Пĕтĕм тĕнче халь хăватлăн калать:
— Мир пурнăçа! Мир пурнăçа!
Пĕтĕм тĕнче ылханать:
— Вилĕм вăрçа! Вилĕм вăрçа!

---




## Ванюк Шупашкарта.

Пĕр ирхине Ванюкпа пиччĕшĕ Шупашкара çитнĕ.

Ванюк илемлĕ хула çине савăнса пăхнă. Пур енче те тăватă е пилĕк хутлă çуртсем ялкăшса ларнă.

Хула урамĕсем анлă та тап-таса. Вĕсене асфальт сарнă. Урамăн икĕ енĕпе пысăк та илемлĕ çăкасем ӳснĕ. Кунта автобуссемпе автомашинăсем вĕçĕ-хĕррисĕр чупнă. Вĕсем малалла кайнă чух урамăн сылтăм енĕпе пынă, каялла килнĕ чух сулахай енĕпе вĕçтерсе иртнĕ.



Акă Ванюкпа пиччĕшĕ Советсен площадьне çитнĕ. Кунта Ванюк Ленин палăкне курнă.

Вĕсем çав кун хулари илемлĕ вырăнсене курса çӳренĕ. Пиччĕшĕ ăна Советсен çуртне, театр çуртне, Пичет çуртне, пир-авăр комбинатне, шкулсене, больни-

цăсене тата пристане кăтартнă. Ванюк анлă Атăла курсан тĕлĕннĕ. Атăл тăрăх пысăк, шурă пăрахутсем, кимĕсем çӳренĕ.

Юлашкинчен музее те кĕрсе курнă.

---

Ванюк Шупашкарта мĕн-мĕн курнă?

Хăвăр Шупашкарта е урăх хулара пулни çинчен каласа парăр.



**Автобус.**

Тӳрĕ тикĕс çулпала
пĕр автобус вĕçтерет,
хăйне ирĕк çул пама
вăл таçтанах систерет.

Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт, асту!

Ай-хай лаши, хăраса,
çул айккипе сиктерет.
Автобусĕ, васкаса,
тата хытă вĕçтерет.

Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Çулна лайăхрах асту.

*А. Кăлкан.*

**Атăл çинче.**

Ту-ут! Ту-ут! Ту-ут!
Хăпарать шур пăрахут.
Пысăк кимĕ — хыçĕнче,
мĕн-ши, мĕн-ши ун çинче?

— Ту-ут! Ту-ут! Ту-ут! —
хирĕç чĕнчĕ пăрахут.
Илсе килет вăл парне,
узбексен шур мамăкне.

Шупашкарта, фабрикра
çип арлаççĕ мамăкран,
пир тĕртеççĕ çиппинчен,
тум çĕлеççĕ пирĕнчен.

Пăхса ил-ха ху çине—
паллăн Шупашкар пирне.

*Е. Афанасьев.*

---

Сирĕн килте заводра е фабрикăра ĕçлекен çын пур-и? Пур пулсан, вĕсем çинчен каласа парăр.

## *Кам? мĕн?* ыйтусемпе ыйтăнакан сăмахсем.

Çынсем çинчен каланă чухне ***кам? камсем?*** тесе ыйтаççĕ. Ытти япаласем çинчен каланă чухне ***мĕн? мĕнсем?*** тесе ыйтаççĕ.

Çак калава вуласа тухăр та малтан **кам?** тесе ыйтăнакан сăмахсене çырса илĕр. Унтан **мĕн?** тесе ыйтăнаканнисене çырăр.

### С а д.

Пирĕн шкулăн сад пур. Унта пан улми, сливă, грушă ÿсет. Марук йывăççене шăварать. Иван, Петĕр тата Вера шыв йăтаççĕ. Ачасем çимĕç йывăçĕсене аван пăхаççĕ.

---

Малтан **кам?** тесе ыйтăнакан сăмахсене, унтан **мĕн?** тесе ыйтăнаканнисене çырса илĕр.

Атте, анне, пахча, ĕне, рабочи, арман, вите, йăмăк, пичче, аппа, шкул, шăллăм, лĕтчик, трактор, колхозник, магазин, автобус, урам, лаша.

### Пирĕн ял.

Пирĕн ял пысăк та илемлĕ. Лайăх. Кашни çулах çĕнĕ пÿртсем ÿссе лараççĕ. Пÿрчĕсем таса та çутă. Халĕ пирĕн кашни килтех электричествă çутатать, радио калаçать.

Ял варринчи шкул çурчĕпе клуб катаранах илемлĕн куранса лараççĕ.

Ял вĕçĕнче, юхан шыв хĕрринче, колхозăн фермă çурчĕсем вырнаçнă. Унта ĕнесем, сурăхсем, сыснасем, хурсем тата чăхсем усраççĕ. Колхоз фермăсенчен çулсеренех пысăк тупăш илет. Колхозниксем колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ. Тыр-пулпа пахча çимĕç нумай туса илеççĕ.

Çуркунне, йывăççем çулçă сарсан, пирĕн ял татах та илемленет. Вăл йывăççем айĕнче пысăк сад пек куранса ларать.

---

Хăвăр ял çинчен каласа парăр.

Ваттисен сăмахĕ.

Пĕччен хулă хуçăлать, нумай хулăран тунă шăпăра хуçма çук.



**Ял урамĕ.**

Пирĕн урам вăрăм та анлă. Урам икĕ айккипе колхозниксен пысăк та çĕнĕ пӳрчĕсем ларса тухнă. Вĕсене

тимӗр, хӑма е шифер витнӗ. Кашни пӳртӗн урамалла виҫшер е тӑватшар пысӑк чӳречесем. Чӳрече хупписене эрешлесе тӗрленӗ, вӗсене шурӑ, кӑвак, кӗрен тӗспе сӑрланӑ.

Урам варринче анлӑ ҫул выртать. Ҫулӑн икӗ енӗпе тирек е йӑмра лартса тухнӑ. Вӗсем ҫуллахи вӑхӑтра яла илем кӳреҫҫӗ.

Ҫул тӑрӑх хамӑр колхозӑн тата ытти колхозсен машинисем сахал мар ҫӳреҫҫӗ. Эпӗ хамӑр урампа ҫӳреме юрататӑп.

### Аслӑ урам.

Аслӑ урам, тӳр урам,
Ик айккипе ҫӗн ҫуртсем,
Ик айккипе йывӑҫсем —
Ҫӗмӗртсемпе чиесем.

Аслӑ урам, тӳр урам
Хӑйӗн капӑр тумӗпе,
Хӑйӗн чаплӑ сӑнӗпе
Симӗс пурҫӑн сарнӑ пек.

*В. Давыдов.*



### Завод.

Пирӗн хулара заводсем чылай. Вӑл заводсенче питӗ нумай рабочисем ӗҫлеҫҫӗ.

Пирӗн атте те заводра ӗҫлет. Вӑл ирех тӑрса тумланать те сакӑр сехете ӗҫе тухса каять. Анне ӑна яланах апат ҫитерсе ярать.

Атте кирпĕч заводĕнче нумай çулсем хушши ĕçлет ĕнтĕ. Вăл хăй ĕçне тӳрĕ кăмăлпа тата питĕ тăрăшса тăвать. Çавăнпа та ăна заводра питĕ хисеплеççĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна медальпе орден та панă. Ун çинчен хаçатра та пичетлесе кăлараççĕ, сăнне те ӳкереççĕ. Ӳссе çитĕнсен, эпĕ те атте пекех ĕçе юратса тăвакан пулатăп.

---

Хăвăрăн аçăрсем тата аннĕрсем ăçта тата мĕнле ĕçлени çинчен каласа парăр.

### Урамра çӳренĕ чухне астумалли йĕркесем.

1. Урамра, çул çинче тĕрлĕ вăйăсем ан выльăр.

2. Урамра е çул тăрăх пынă чух яланах сыхланса пырăр.

Асра тытăр: автомобиле, автобуса е мотоцикла хăвăрт чарма май çук.

3. Хула урамĕпе пынă чух тротуарпа çеç çӳрĕр. Урам урлă каçмалла пулсан, кăтартнă вырăнтан çеç каçăр.

4. Çывăхра пыракан машинă умĕнчен чупса ан каçăр, вăл иртсе каясса кĕтĕр.

5. Иртсе пыракан машинăран ан çакланăр, ан уртăнăр.

6. Автомашинă пынă вăхăтрах ун çинчен ан сикĕр.

7. Автобус е автомобиль чарăнсан, мал енчен мар, ун хыçĕнчен çаврăнса иртĕр.

Урамра çӳремелли йĕркесене ан пăсăр, юлташăрсене те пăсма чарăр.

## *Мĕнле?* ыйтупа ыйтăнакан сăмахсем.

Çак предложенисене вуласа тухăр.

**Ăшă** çуркунне. **Хĕрлĕ** ялав.

**Пысăк** самолёт вĕçет.

**Сарă** тулă хумханать.

Выльăхсем **анлă** улăха тухрĕç.

**Кăвак** пĕлĕт шăвать.

Паллă тунă сăмахсен пĕр пек енĕсене асăрхаса пăхăр. Ун пек сăмахсем ***мĕнле?*** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

***Мĕнле?*** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тупса калăр.

Тĕслĕх: Ăшă — сивĕ.

| | |
|---|---|
| Ăшă... | Пылак... |
| Тĕттĕм... | Йывăр — |
| Хура — | Çинçе — |
| Хаяр — | Типĕ — |
| Кĕске — | Çĕнĕ — |

Скобкăри ***мĕнле?*** ыйту вырăнне кирлĕ сăмах лартса çырса илĕр.

(Мĕнле?) хĕл иртет.

(Мĕнле?) çуркунне çитет.

(Мĕнле?) юр кайса пĕтĕ.

(Мĕнле?) кунсем пуçланĕç.

Йывăççем (мĕнле?) çулçă кăларĕç.

(Мĕнле?) хирте трактор кĕрлĕ.

Урамра (мĕнле?) ачасем вылĕç.

Хушса çырмалли сăмахсем: *сивĕ, ырă, шурă, ăшă, симĕс, анлă, пĕчĕк.*

### Парне.

Кĕçех мартăн 8-мĕшĕ — Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен уявĕ çитет.

Вăл кун аннесемпе аппасене парнесем параççĕ. Анне манран нимле парне те кĕтмест-ха. Вăл мана пĕ-

чĕк тесе шутлать. Çапах та эпĕ анне валли парне хатĕрлетĕп.

Уяв кунĕ çитсен, эпĕ пуринчен те иртерех тăрăп. Никама систермесĕр сĕтел çине эпĕ хам тунă сăмса тутăрне хурăп. Вĕсем çумĕнче илемлĕ саспаллисемпе çырнă хут выртĕ.

Анне ыйхăран вăранĕ те тӳрех ман парнене асăрхĕ.

«Юратнă анне. Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе Петя ывăлăртан»,— тесе вулĕ анне эпĕ çырнă хута.

Питĕ пысăк савăнăç пулĕ пирĕншĕн вăл кун!

*В. Прохоров.*

---

Ача амăшĕ валли мĕнле парне хатĕрленĕ?

Эсир мĕнле парне хатĕрлерĕр?



**Амăшĕпе ачисем.**

Сире кам юрататать,
Сире кам ачашлать,
Куç хупмасăр ларать
каçхине,
Хĕлĕн-çăвĕн ĕçлет,
Ĕçтерет-çитерет?
— Вăл пирĕн юратнă анне!
Кам, сăпка сиктерсе,

юрăпа йăпатать
е юмах юптарать
хăш чухне?
Сире кам юратса
теттесем те парать?
— Вăл пирĕн юратнă анне!
Ӳркенсен, алхассан,
хушнине тумасан,
кам чĕри ыратать
ун чухне?
Сире кам ӳкĕтлет,
сире кам вĕрентет?
— Çавах, пирĕн юратнă
аннех!

*А. Çулĕç.*

---

Çак сăвăра кам çинчен çырнă?

Амăшĕ ачисене мĕнле пăхса ӳстерет?

Каласа парăр: Эсир килтисене мĕнле пулăшатăр?

Пӳрт-çурт пуçтарма, савăт-сапа çума мĕнле пулăшатăр?

Пӳрт-çурт таврашĕнче, пахчара, хирте мĕн тăватăр?

# Таса пул-сывлăхлă пулăн



**Сывлăхшăн тăрăшни.**

Пит-куçа, мăя, хăлхасене кашни кунах çумалла. Алăсене ĕç хыççăн тата апат çиес умĕн яланах çăвас пулать. Ирхине çăвăннă чух шăлсене шăл щĕткипе, порошокпа тасатмалла, кашни апат çинĕ хыççăн сивех мар таса шывпа чӳхемелле.

Эрнере пĕрре мунча кĕмелле, кĕпе-йĕм улăштармалла.

Яланах таса сăмса тутăрĕпе çеç усă курмалла.

Çӳçе, чĕрнесене ӳссе кайма памалла мар, тек-текех касса тăмалла.

Пушă вăхăта ытларах таса уçă сывлăшра ирттерме тăрăшмалла. Тĕрлĕрен вăйăсем выляни сывлăхшăн усăллă.

Сывлăхшăн тата мĕн кирлĕ?

Пӳртре тусан кăларма, çӳпĕлеме, урайне сурма юрамасть. Пӳлĕмри сывлăша тăтăшах форточкă е алăк уçса уçăлтармалла. Çывăрмалли вырăна таса тытмалла, кашни эрнерех тула тухса силлемелле.

Çи-пуçа яланах таса тытмалла. Çывăрнă чух çиелти кĕпе-йĕме хывса хумалла. Пуç урлă тата алăсем çинчен витĕнсе çывăрни сиенлĕ.

---

Сывлăхлă пулас тесен, мĕн-мĕн тумалла?

**Çырнă тата вуланă чух мĕнле лармалла.**

Класра е килте çырнă тата вуланă чухне сĕтел хушшинче тӳрĕ лармалла. Кăкăрпа сĕтел хĕрри çине выртма юрамасть. Çырнă чухне икĕ алă та партă çинче пулмалла. Урасене тӳрĕ пусса лармалла. Тĕрĕс ларсан, çурăм курпунланмасть, хул пуççисем тӳрĕ тăракан пулаççĕ. Сывласса та лайăх, тулли кăкăрпа сывламалла.

Çак ӳкерчĕксем çине пăхса, партă е сĕтел хушшинче мĕнле лармалли çинчен каласа парăр.



## *Мĕн тăвать?* ыйтупа ыйтăнакан сăмахсем.

Ӳкерчĕксем çине пăхса кам мĕн туни çинчен калăр.



*Ача вулать.*

Ача мĕн тăвать?
Лаша мĕн тăвать?
Ене мĕн тăвать?





*Лаша чупать.* *Ене тăрать.*

Кам мĕн туни çинчен каласа парăр.
Учитель мĕн тăвать?
Вĕренекен мĕн тăвать?
Тракторист мĕн тăвать?
Дояркă мĕн тăвать?

**Вĕрентет, вĕренет, сухалать, сăвать** йышши сăмахсем — ***мĕн тăвать?*** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсем.

Çак предложенисене çырса илĕр. **Мĕн тăвать?** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсене йĕр туртса паллă тăвăр.

Ача питне çăвать. Коля шăлне тасатать. Хĕрача шкула каять. Марук çыру çырать. Урамра лаша çӳрет. Тракторист суха сухалать.

Кирлĕ сăмахсем хушса, предложенисем туса çырăр. Çиçĕм... Аслати... Çил... Çумăр... Шыв... Хĕвел...

Хушмалли сăмахсем: *çиçет, вĕрет, юхать, авăтать, çăвать, пăхать.*

Çапла çырăр:

*Çиçĕм çиçет.*



**Манăн кун йĕрки.**

Эпĕ ирхине 7 сехетре çывăрса тăратăп. Тăрсанах гимнастикă тăватăп. Ун хыççăн вырăна пуçтарса тирпейлетĕп, тумланатăп, шăла-çăвара тасататăп, питкуçа çăватăп. Шăлăнасса таса шурă ал шăллипе шăлăнатăп. Унтан ирхи апат çиетĕп те шкула каятăп.

Шкулта тăвată сехет вĕренетĕп.

Кăнтăрла иртсен, пĕр сехетре эпĕ шкултан таврăнатăп. Алăсене çăватăп та кăнтăрлахи апат çиетĕп. Апат çинĕ хыççăн пĕр сехет уçăлса çӳретĕп, тĕрлĕ вăйăсем вылятăп, аннене пулăшатăп. Унтан киле панă ĕçсене тăватăп. Уроксене хатĕрлесе пĕтерсен, çитес кун шкула каймa кирлĕ япаласене сумкăна чиксе хуратăп. Ун хыççăн юлташсемпе выляма каятăп: çулла лапталла, чушкăлла вылятăп, хĕлле вара çунашкапа, конькипе ярăнатăп. Хăш чухне кинона каятăп.

7 сехетре каçхи апат çиетĕп. Каçхи апат çинĕ хыççăн библиотекăран илнĕ кĕнекене вулатăп, тĕрлĕ ўкерчĕксем ўкеретĕп.

9 сехетре çывăрма выртатăп.

Çапла манăн уроксене хатĕрленме те, тĕрлĕ вăййăсене выляма та яланах вăхăт çитет.

---

Хăвăрăн кун йĕрки çинчен каласа парăр.

## Вăйлă пулас килет-и?

Эпир час-часах кĕрешмелле вылятпăр. Манăн юлташсенчен чи вăйли — Петĕр. Эпир пурте Петĕр пекех вăйлă пуласшăн. Çавăнпа та пирĕн хушăра тавлашу тухрĕ.

— Вăйлă тата сывлăхлă пулма кашни ир сивĕ шыв-па çăвăнас пулать, гимнастикă тумалла,— терĕ Коля.— Манăн пичче яланах çавăн пек тăвать.

— Ыйтăр-ха Кĕркури мучирен, вăл мĕн калĕ,— терĕм эпĕ.

— Апата яланах пĕр вăхăтра тата тăраниччен çининчен усăлли нимĕн те çук, тейĕ.

— Эпĕ атте-анне каланине яланах итлетĕп, пур ĕçе те вĕсем вĕрентнĕ пек тăватăп. Çавăнпа эпĕ вăйлă,— терĕ Петĕр.

Эпир çапла нумай тавлашрăмăр. Пĕр-пĕрне парăнасшăн пулмарăмăр. Хĕрў тавлашура пирĕн сăмахсене Коля пиччĕшĕ итлесе тăнине те эпир асăрхаман.

— Эсир пурте тĕрĕс калатăр. Хăвăр каланисене кашни кунах туса пырсан, чăн та, вăйлă та сывлăхлă пулатăр,— терĕ пире Коля пиччĕшĕ.

*В. Прохоров.*

---

Çак калава темиçен вулăр. Кашни ача каланине уйрăм вĕренекен вулатăр.

# Çын ячĕсене, хушамачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси.

Çак сăвва вуласа тухăр. Çын ячĕсене мĕнле саспаллипе пуçласа çырнине асăрхăр.

**Выляма чĕнни.**

Атя, Ванюк, урама.
Унта сана кĕтеççĕ.
Мишша, Анна, Хĕвекла
вылямашкăн чĕнеççĕ.

Çын ячĕсене **пысăк саспаллипе** пуçласа çыраççĕ.

Вулăр та çырса илĕр. Çын ячĕсене аялтан туртăр.



**Шыв арманĕ.**

Урамра шыв юхнă. Иванпа Мишша шыв арманĕ тунă. Якур пĕве пĕвеленĕ. Вĕсем арман авăртнă.

Малтан арçын ячĕсене, унтан хĕрарăм ячĕсене çырса илĕр.

Павăл, Анна, Якку, Улькка, Тамара, Виктор, Нина, Макçăм, Урине, Кĕркури.

Арçын ячĕсем: Павăл,...

Хĕрарăм ячĕсем: Анна,...

Çак предложенисенчи точкăсем вырăнне çын ячĕсене çырăр.

Эпĕ... ятлă. Манăн юлташ... ятлă. Вăл доска патĕнче ĕçлет. Пирĕн хыçри партă хушшинче... лараççĕ.

Малтан хĕрачасен ячĕсене, унтан арçын ачасен ячĕсене çырса илĕр.

Петя, Вера, Коля, Таня, Лена, Леня, Валя, Санюк, Кирук, Ваççа, Юра, Наçтук, Кĕтерук, Кĕçтӳк.

Хĕрачасен ячĕсем:

Арçын ачасен ячĕсем:

## Физзарядкă.

Ирхине эп тухатăп картишне.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Алсене сарса тăратăп:
чĕкеç пек çунатланатăп,
пĕкĕ пек те авăнатăп.

Вара хам турник çинче
Вăй вылятăп чылайччен.
Унтан сивĕ шывпала
çăвăнатăп эп ялан.

Кайран питĕ кăмăллă,
вĕренетĕп çăмăллăн.
Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă...
Физзарядкă эп тăватăп.

*Г. Ефимов.*

## Дежурнăйсемпе санитарсен ĕçĕсем.

Тимук шкултан таврăнчĕ те шăллĕне каласа парать:

— Миша, ыран манăн дежурнăй пулмалла! Эпĕ учительницăна тетрадьсем пухма тата класри йĕркесене астума пулăшатăп. Клас доскине тасататăп.

Тата пирĕн класра санитарсем пур. Вĕсем класри тасалăхшăн тăрăшаççĕ. Переменă вăхăтĕнче пур ачасене те коридора кăлараççĕ, пӳлĕме форточкă уçса уçăлтараççĕ.

Санитарсем вĕренекенсем таса тумланса пынине, çӳçе туранине, алăсене, хăлхасене, мăя таса çунине те тĕрĕслеççĕ.

Пире таса пурăнма хăнăхтараççĕ. Эпир пурте пирĕн клас чи таса пултăр тесе тăрăшатпăр.

---

1. Хăвăр дежурнăй пулни çинчен каласа парăр.
2. Дежурнăйсем класра мĕнле ĕçсене тăваççĕ?
3. Санитарсен ĕçĕсем çинчен каласа парăр.

**Таса пурăн — сывлăхлă пулăн!**

Вуласа тухăр та çырса илĕр. Паллă тунă сăмахсене аялтан туртăр.

### Дежурнăйсем.

Паян пирĕн класра **Галя Иванова** дежурнăй. Ыран **Ваççа Егоров** дежурнăй пулать. Дежурнăй класри йĕркесене асăрхать.

Çын ячĕсемпе хушамачĕсене **пысăк саспаллипе** пуçласа çыраççĕ.

Хăвăрăн ятăрпа хушаматăра çырăр.

Çырса илĕр.

Юрий Гагарин. Толя Николаев. Вера Самсонова. Валя Федорова. Иван Соколов. Анна Иванова.




## Ленин атте.

Ирĕк, савăк пурăнмашкăн
Советсен çĕршывĕнче.
Халь хисеплĕ халăх эпир
мĕн пур халăх йышĕнче.

Каласма именесси те
тăрса юлчĕ ĕлĕке.
Ирĕккĕн, илемлĕн, уççăн
янăрать пирĕн чĕлхе.

Çиçĕм пек çиççе çутатрĕ
Ленин шухăшĕ пире.
Вăл кӳрсе, уçса кăтартрĕ
çĕнĕ ĕмĕрти ире.

*И. Ивник.*

---

Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.



**Ленин хушса хăварнипе мĕн тунă?**

Пирĕн çĕршывра заводсемпе фабрикăсем, рабочисем валли пысăк та çутă çуртсем нумай тунă. Ялсенче колхозсем тунă.

Хуласемпе ялсенче яслисем, ача сачĕсем, шкулсем, библиотекăсем, клубсем, больницăсем тăва-тăва лартнă.

Рабочисемпе колхозниксем валли канмалли çуртсем тата санаторисем уçнă.

Çак çуртра революциччен çĕр улпучĕн çемйи пурăннă. Ку çемьере пилĕк çын пулнă. Çĕр улпучĕсем хăйсем нимĕн те ĕçлемен, вĕсемшĕн тарçисем ĕçленĕ. Пахчинчи чечекĕсем патне ют çынна никама та яман, кунта вĕсен ачисем çеç уçăлса выляса çӳренĕ.



Халĕ кунта ачасен çурчĕ. Унта — аллă ача.

Çуртра ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасем пурăнаççĕ. Ачасем хăйсен çуртне тăван çурта юратнă пек юратаççĕ.

Кунта ачасене питĕ лайăх пăхаççĕ: вĕсене аван çитереççĕ, тумлантараççĕ.



Ачасем шкулта вěренеççě, пушă вăхăтра чечек пахчине тирпейлесе пăхса тăраççě, чечексем хушшинчи çулсене тасатаççě. Ирěк вырăнта вăйăсем выляççě.

Ленин рабочисемпе хресченсен тусě пулнă. Вăл ěçлекенсене пурне те лайăх пурăнмалла тăвассишěн тăрăшнă.

Ленин вилнě, анчах вăл вěрентсе хăварнисене эпир нихçан та манас çук.

Совет çыннисем туслă пурăнаççě. Аван ěçлеççě, хăйсен Советлă Тăван çěршывне чунтан юратса сыхлаççě.

---

Совет влаçě çěр улпучěсен çуртěнче мěн уçнă?

Ленин камшăн тăрăшнă?

**Ленин.**

Халăхсен çулпуçě Ленин
пирěнпе пěрле ялан.
Унăн çутă хěвел евěр
ячě сӳнмě нихăçан.

Çěршывра паян куратпăр
тулăх пурнăç, çавăнпа
ăна эпир асăнатпăр
пурте ырă кăмăлпа.

Унăн вилěмсěр сăнарě
малалла чěнет пире.
Часах пěтěм халăх курě
коммунизмри ире.

*Г. Лисин.*

# Килти выльăхсем тата тискер кайăксем



## Кушак.

Мăр-мăр кушак. Унăн çамки хăмăр мар-и?

Кушакăн хăлхисем çивĕч, сухалĕ вăрăм, кĕрĕкĕ пурçăн. Куçĕсем çунаççĕ, чĕрнисем кĕреççĕ те тухаççĕ, ури лапписем мамăк пек çемçе те, хурçă пек хытă тытаççĕ.

Кушак йăпăлти те питĕ чее: авкаланать те карăнкалать, хÿрине вылятать, куçне-пуçне хупкалать, хĕвелте выртма юратать. Каç пулсан, кайăка каять. Вăл шăши тытать.

*К. Ушинский.*

---

Кушакăн хăлхисем, сухалĕ, кĕрĕкĕ, куçĕсем, чĕрнисем, ура лапписем мĕнли çинчен калăр.

Кушак кăнтăрла мĕн тăвать?

Каçхине вăл мĕн тăвать?

В а т т и с е н с ă м а х ĕ.

Шăшишĕн кушак та тискер кайăк.

## Шăшин тусĕпе тăшманĕ.

Шăши çури уçăлма тухнă пулнă. Картишĕнче çÿренĕ-çÿренĕ те каллех амăшĕ патне таврăннă. «Ну, анне, эпĕ икĕ тискер кайăк куртăм. Пĕри пит хăрушăскер, тепри — йăваш». Амăшĕ калать: «Кала-ха, мĕнле тискер кайăксем вĕсем?» Шăши çури калать: «Пĕри —

хăрушăскер, картишĕнче ак çапла çӳрет: урисем унăн çара, кикирикĕ хĕрлĕ, куçĕ siksе тухас пек, сăмси çекĕл пек. Эпĕ унăн çумĕпе иртсе пынă чухне вăл çăварне карчĕ, урине çĕклерĕ те çав тери хытă кăшкăрма тытăнчĕ, эпĕ хăранипе ниçта кайса кĕме пĕлмерĕм»,— тет. «Ку автан, — тет ватă шăши.— Вăл никама та сиен кӳмест, унран ан хăра. Ну, тепри мĕнлескер?» «Тепри хĕвел питĕнче ăшăнса выртатчĕ. Мăйĕ унăн шурă, урисем сăрă, яка, хăй шурă кăкăрне çуласа выртать, хӳрине кăшт çеç пăлтăртаттарать, ман çинелле пăхать». Ватă шăши калать: «Тăмсай эсĕ, тăмсай! Ку шăпах кушак аçи вĕт»,— тет.

---

Шăши çурин йăнăшĕ çинчен каласа парăр.

**Пушар йытти.**

Пĕрре çурт çунма тытăннă. Пушар сӳнтерекенсем çурт патне пырсан, вĕсене хирĕç хĕрарăм чупса тухнă. Йĕре-йĕре вăл пӳрте икĕ çулхи хĕрача тăрса юлни çинчен каласа панă.





Пушар сӳнтерекенсем пӳрте Боб ятлă йытта кĕртсе янă. Боб пусма тăрăх чупса улăхнă та тĕтĕм ăшĕнче çухалнă.





Пилĕк минутран вăл пӳртрен чупса тухнă. Шăлĕпе кĕпинчен çыртса, вăл хĕрачана йăтса тухнă.

Амăшĕ хĕрĕ патне чупса пынă та хĕрĕ чĕрĕ юлнăшăн савăннипе йĕрсе янă.



Боб каллех пӳртелле туртӑннӑ. Пӳрте чупса кӗрсе, вӑл часах ҫӑварӗпе темскер ҫӗклесе тухнӑ.

Боб мӗн ҫӗклесе тухнине лайӑххӑн асӑрхаса илсен, пурте ахӑлтатса кулса янӑ. Вӑл пысӑк пукане ҫӗклесе тухнӑ пулнӑ.

*Л. Толстой.*

---

Ҫунакан пӳртре кам тӑрса юлнӑ?

Пӗчӗк хӗрачана ҫӑлма пушар сӳнтерекенсем пӳрте мӗне кӗртсе янӑ?

Пушар йытти, пӳртрен хӗрачана йӑтса тухсан, ҫунакан пӳрте мӗншӗн иккӗмӗш хут кӗрсе кайнӑ?

## Выльӑх-чӗрлӗх ячӗсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырасси.

Ҫак калава вуласа тухӑр. Йытӑ ячӗсене кӑтартса парӑр.

### Улайпа Эскам.

Пирӗн Улай ятлӑ йытӑ пур. Кӳршӗре тата тепӗр йытӑ пур. Ӑна Эскам тесе чӗнеҫҫӗ. Эпир Улайпа Эскама ҫунашка туртса ҫӳреме вӗрентрӗмӗр. Кӳлсе лараттӑмӑр та урам тӑрӑх ҫил пек вӗҫтереттӗмӗр.

Выльӑх-чӗрлӗхсен уйрӑм ячӗсене **пысӑк саспаллипе** пуҫласа ҫыраҫҫӗ.

Хӑвӑр пӗлекен лаша ячӗсемпе йытӑ ячӗсене каласа парӑр.

Малтан лаша ячӗсене, унтан йытӑ ячӗсене ҫырса илӗр.

Сархи, Урхамах, Кампур, Сивкӑ, Улай, Хураҫка, Орлик, Шарик, Спутник, Лайкӑ, Эскам, Ҫиҫӗм.

Лаша ячӗсем: Сархи.
Йытӑ ячӗсем: Кампур.

Çак предложенисене çырса илӗр. Выльӑх-чӗрлӗхсен ячӗсене аялтан туртӑр. Вӗсене пысӑк саспаллипе пуçласа çырассине асӑрхӑр.

Хураçка кил сыхлать. Атте Сархипе вӑрмана кайрӗ. Муркӑ шӑши тытать.

### Кампур.

Пирӗн колхозӑн чӑх-чӗп ферми пур.

Пӗр ирхине эпир Петӗрпе иксӗмӗр Санюк аппа патне фермӑна кайрӑмӑр.

— Килӗр, килӗр, ачасем, чӗпсене кӗрсе курӑр-ха,— терӗ пире Санюк аппа.

Картиш тулли сарӑ чӗпӗсем шимп-шимп! шимплетсе çӳреççӗ. Пурте вӗсем пӗр-пӗринпе килӗштерсе калаçнӑн туйӑнать. Эпир вӗсем çине пӑхса савӑнса тӑратпӑр.

Унччен те пулмарӗ — картиш варринче çӳрекен чӑпар автан çуначӗсене саркаласа кӑтиклетме пуçларӗ. Чӗпсем, ун сассине илтсе, йывӑç айне чупса кӗме тытӑнчӗç. Пӗтӗм картиш пӑлханать.

— Мӗскер пулчӗ?— тесе ыйтрӑмӑр эпир Санюк аппаран.

— Ав курӑр: çӳлте хурчка явӑнать,— тет пире Санюк аппа.

Çав самантрах çурт хушшинчен лапсӑркка Кампур сиксе тухрӗ. Вӑл хӑлхисене çӳлелле чанк! тӑратнӑ.

— Авӑ Кампур чӗпсене сыхлама хурала тухрӗ,— терӗ аппа.

Хурчка фермă тĕлĕнче каллĕ-маллĕ çаврăнкаласа вĕçрĕ, чĕпсем патне темиçе хут анма хăтланчĕ. Анчах Кампур хаяррăн вĕрнине кура çуначĕсене лăпăс-лăпăс сулкаласа аяккалла вĕçсе кайрĕ.

Чăпар автан савăнăçлăн авăтса ячĕ. Чĕпсем йывăçсем айĕнчен капăрах сиксе тухрĕç.

*В. Давыдов-Анатри.*

---

Хăвăр фермăра пулни çинчен каласа парăр.

## Хурсем.

Пирĕн енче улăхсемпе кӳлĕсем йышлă. Çавăнпа та, тен, кашни килĕренех хур усраççĕ. Колхозăн та хур ферми пур. Хурсене Таруçпа Варук аппасем пăхаççĕ. Колхоз хурсенчен пысăк тупăш илет. Хур какайĕ çуллă та тутлă, ăна патшалăха сутаççĕ. Хур тĕкĕпе çăмне те патшалăх лайăх хакпа туянать.

Пирĕн килте те хур пур. Кашни çуркуннех ами пусса ларса чĕпĕсем кăларать. Аçи вара çăмха пек чĕпĕсене куç илмесĕр хураллать. Никама та чĕпписем патне çывăха ямасть. Йытă-качкана курсан та, вăл ăна таçта çитиех мăйне тăсса хăваласа каять. Иртсе пыракан ача-пăчана тӳрех сăхать, чĕпĕсем патĕнчен тартать.

Чĕпписем кăшт ӳссен, вара хур амипе аçи какаласа вĕсене улăха илсе анаççĕ. Улăхра чĕпписем симĕс курăка чĕпĕлтере-чĕпĕлтере çиеççĕ, хурт-кăпшанкă тупса хыпаççĕ. Унтан анлă кӳлле ишме кĕрсе каяççĕ. Кӳлĕре вĕсем нумай хушă савăнăçлăн ярăнса çӳреççĕ.

Çу каçипе ирĕкре çӳресе хур чĕпписем хăвăрт ӳсеççĕ. Кĕркуннепе вĕсем ашшĕ-амăшĕ пысăкăшех пулаççĕ, вĕсенчен кăшт çинçерех кăна курăнаççĕ.

Эпĕ хурсене питĕ юрататăп.

## Тĕлĕнмелле чăх чĕппи.

Чăхă чĕпĕ кăларнă. Унăн чĕпписем чупса çӳреме, пĕчĕк урисемпе чакаланса, хуртсем шырама тытăнчĕç. Анчах пĕр чĕппи темле, ыттисем пек мар пулнă. Вăл çăмха пек çаврака, çăрарах тĕклĕ, сап-сарă тĕслĕ, кĕске уораллă, сарлака лапчăк сăмсаллă пулнă.

Чăхă ку чĕпĕрен тĕлĕннĕ, çапах та хăй кăларнă пирки ăна та юратнă.

Кăшт пурăнсан, чăхă хăйĕн чĕпписене çĕртен хуртсем шыраса тупма вĕрентме пуçларĕ. Пĕрре вăл хăйĕн чĕпписемпе пĕве хĕрринче çӳрет. Унăн кĕске уораллă чĕппи, шыва курсанах, тӳрех шыва кĕрсе кайрĕ. Чăхă кăт-кăтик! тет, çуначĕсене сарса, пĕве хĕррипе чупкаласа çӳрет, кĕç шыва сикес пек. Хăйĕн чĕппи шывра путса вилесрен хăрать.

Чĕпписем те çинçе сассисемпе çуйăхма тытăнчĕç.

Анчах кĕске уораллă чĕпĕ путса вилме шутламасть те. Вăл, шыв çинче мамăк ишнĕ пек, савăнăçлăн каллĕ-маллĕ ишсе çӳрет.

Чăхă çуйăхнине илтсе, пӳртрен ватă карчăк Тарье чупса тухрĕ. Мĕн пулнине курчĕ те хăйне хăй вăрçма тытăнчĕ: «Ара, асăрхамасăр, чăх айне кăвакал çăмарти хунă-çке эпĕ»,— тет.

*К. Ушинский.*

---

1. Калав ятне мĕншĕн «Тĕлĕнмелле чăх чĕппи» тенĕ?
2. Ăнлантарса парăр: «тĕлĕнмелле чăх чĕппи» шывра мĕншĕн путман?

## Кăвакал.

Чĕпписемпе кăвакал
Çырма хĕрне ав анать.
Нарт-нарт кăвакал
Шывра ишет, çăвăнать.



Çӳлте хӑлат вӗçнинс
Аякранах вӑл курать.
Нарт! тӑвать те шыв тӗпне
Чӗпписемпе пытанать.

*С. Юшков.*

**Хураçкапа икӗ ула курак.**



Калава картинӑсен йӗркипе çырса илӗр.
Икӗ ула курак вӗçсе пынӑ.
Хураçка какай çиме тытӑннӑ.
Икӗ ула куракӗ те вӗçсе кайнӑ.
Тепӗр ула куракӗ какайне хыпса илнӗ.
Пӗр ула куракӗ Хураçкана хӳринчен пырса сӑхнӑ.

## Тилĕпе кушак.

(Юмах.)

Пĕрре кушак вăрманта тилле тĕл пулать. «Тилĕ вăл ăслă, хурапа шурра та нумай курнă»,— шухăшлать кушак хăй ăшĕнче. Çавăнпа та вăл ун умĕнче йăпăлтатса:

— Аван-и, тилĕ тус! Сывлăхсем мĕнле? Йывăр вăхăтна мĕнле пурăнкаласа ирттертĕн?— тесе калаçать.

Тилĕ кушака ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпине çитиччен чăр! пăхса илет. Малтан вăл ăна хирĕç çăварне те уçас теменччĕ, анчах чăтаймасăр, мăн кăмăллăн:

— Эх, эсĕ шăши-пăши! Мĕн калаçатăн манпа? Кам-ха эс? Мĕн тума пултаратăн?— тесе ыйтать.

— Манăн пĕртен-пĕр ăсталăх пур, — тет кушак йăвашшăн.

— Мĕнле ăсталăх?— ыйтать тилĕ.

— Йывăç çине сиксе хăпарса, йытăран çăлăнма пултаратăп.

— Урăх ним тума та пĕлместĕн-и? Эпĕ çĕр тĕслĕ ĕçе пултаратăп. Кунсăр пуçне манăн пĕр михĕ чеелĕх пур. Атя пĕрле. Эпĕ сана чееленме вĕрентетĕп,— тет тилĕ.

Кĕтмен çĕртен пĕр сунарçă йытăсемпе иртсе пырать.

Кушак вăшт тăвать те йывăç çине хăпарса каять. Ешĕл çулçăсем хушшинче вăл курăнмиех пытанса ларать. Тилĕ йывăç çине хăпараймасть. Йытăсем хайхискере ярса илеççĕ те вĕçертмеççĕ.

— Эй, тилĕ тус!— тесе кăшкăрать кушак çӳлтен.— Мĕншĕн вара миххӳне уçмастăн? Аçта кайса кĕчĕ сан çĕр тĕслĕ ăсталăху? Манăн пĕртен-пĕр ăсталăх пур. Вăл ман пурнăçа çăлчĕ,— терĕ тет кушак.

*Пĕр тăван Гриммсем.*

**Килти выльӑхсемпе тискер кайӑксем.**



Йытӑ, тилӗ, кашкӑр, ӗне, сурӑх, упа, качака, сысна, лакша, кушак, чӗрӗп, лаша.

Уйрăммăн çырса илĕр:

*Килти выльăхсем: ĕнĕ... Тискер кайăксем: тилĕ...*

Калăр: вĕсем ăçта тата мĕн çисе пурăнаççĕ?

**Эсир мана пĕлетĕр-и?**

Эпĕ хăвăлта пурăнатăп. Эпĕ мăйăр, çырла, кăмпа çиетĕп. Манăн кĕрĕк ăшă. Хӳре çемçе, çăмăл. Вăл мана йывăç çинчен йывăç çине сикме пулăшать.

Тупмалли юмах.

Çулла кăвак, хĕлле шурă. (Мулкач.)

**Кашкăр.**

Вăрманта та, хирте те чĕрчунсем сивĕрен пытаннă. Шăна-пăван тахçанах пĕтнĕ. Çĕлен-калта тăпра ăшĕнче хытса выртать. Упа хĕл каçма мăн шăтăка кĕрсе пытанать. Арлансем те хăйсен шăтăкĕсенче çывăраççĕ.

Пĕр кашкăр анчах çывăрмасть. Вăл, ниçта кайса кĕреймесĕр, унталла-кунталла чупкалать. Хырăмĕ выçнипе кунĕн-çĕрĕн апат çинчен шухăшлать. Çĕрле, яла пырса, выльăхсене тапăнать.

Ял çыннисем кашкăртан сыхланаççĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене шанчăклă çĕре, ăшă витесене, хупаççĕ.

---

Кашкăр этеме мĕнле сиен кӳрет?

## Мĕн вăл?

Ҫăвак тĕслĕ, ҫивĕч шăллă,
сĕм вăрманта пурăнать,
пăру-путек таврашне,
май килсессĕн, вăл пăвать.

## У п а.

Упа вăрманта пурăнать. Вăл хăмăр та ҫăмламас. Хăй питĕ тĕреклĕ. Хăлхисем ун хупах ҫулҫи пек пысăк та усăк. Ҫамки тĕреклĕ те сарлака. Урисем ҫăмламас.

Акă вăл вăрманпа пырать. Ун тĕлне хăмла ҫырлисем тĕл пулаҫҫĕ. Ҫырлисем сĕтекленсе пиҫсе ҫитнĕ. Упа кайри урисем ҫине тăрать те малти урисемпе ҫырла йывăҫҫисене хăй патне туртса илет. Тутипе ҫырлисене татса ҫиет. Тутлă хăмла ҫырлисем ун кăмăлне каяҫҫĕ.

## Ч е е т и л ĕ.







Каласа парăр:

Çакă хăçан тата ăçта пулса иртнĕ?

Ула кураксем мĕншĕн тилĕ патне пынă?

Мĕн пирки вĕсем хăюланса кайнă?

Тилли мĕн тунă?

Ытти ула кураксем ăçта çухалнă?

Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсене кĕртсе çырăр.

### Чее тилĕ.

Уçланкăра... выртнă. Ун патне... вĕçсе пынă. Вĕсем... вилнĕ тесе питĕ хăюллă пулнă. Сасартăк... тăнă та пĕр... тытнă. Ытти... вĕçсе тарнă.

Уçланкăра миçе курак юлнă?

### Пакша.

Чăрăш тăрăх сиккелет:
    çăмламас пакша.
Эх, персе тытас килет,
    эх, ăçта пăшал?
Хăвăлне кĕрсе каять,
    мăйăр шĕкĕлчет,

каялла сиксе тухать,
чăйлатса илет.
Ķлентĕр евĕр хӳрине
кукăртайнă хăй,
шăп пĕр çуллăх мăйăрне
пуçтарайнă хăй.
Йăкăлт-якăлт сиккелет
çăмламас тетте.
Ķĕрĕк çĕлетес килет,
тытса пар, пичче!

*С. Шавли.*

## Мулкач.

Хĕлле. Çанталăк сивĕ. Мулкач кунĕпех пĕр тарăн вар пуçĕнчи кĕрт айĕнче выртрĕ. Выçă хырăмĕ чĕпĕте-чĕпĕте илчĕ. Акă каç та пулчĕ. Тĕттĕмленчĕ. Мулкач юр айĕнчен майĕпен пуçне кăларчĕ, хăлхине чăнк! тăратрĕ.

Таврара нимĕнле сас-чĕвĕ те илтĕнмерĕ. Хайхи юр айĕнчен ялт! сиксе тухрĕ те силленсе илчĕ.

Вăл тӳрем уя сиксе тухрĕ. Пĕр самант пур еннелле пăхса илчĕ. Ķаллех нимĕнле сас-чĕвĕ те илтĕнмерĕ. Мулкач ял еннелле вĕçтерчĕ.

Вăл сада пырса кĕчĕ. Пĕр çамрăк улмуççи патне çитсе тăчĕ. Çав самантра йытă вĕрсе ячĕ. Çавăнтах мулкач садран тухса сирпĕнчĕ.

## Мĕн вăл?

Вăл çулла хăмăр тумпа,
хĕл çитсессĕн — шурăпа,
Пурăнать вăл вăрманта,
Улах, чăтлăх вырăнта.
Ик хăлхине тăратать,
Пуринчен те вăл хăрать.
Çулçă, турат юрататъ —
Вăл мĕнле чĕрчун пулать?

*С. Юшков.*

## В и ç ĕ  у п а.

I.

Пĕр хĕрача вăрмана кайнă пулнă. Вăрманта вăл аташса кайнă та киле таврăнма çул шыраса çӳренĕ, анчах çулне тупайман, вăрманти пĕр пӳрт патне пырса тухнă.

Алăкĕ уçă пулнă; вăл алăкран пăхать те курать — пӳртре никам та çук, вара пӳрте кĕрет. Çак пӳртре виçĕ упа пурăннă. Пĕр упи ашшĕ пулнă, ăна Михайло Иванович тесе чĕннĕ. Вăл пысăк та çăмламас пулнă.



Тепри упа ами пулнă. Вăл кăшт пĕчĕкрех пулнă, ăна Настасья Петровна тесе чĕннĕ. Виççĕмĕшĕ пĕчĕк çеç упа çури пулнă, ăна Мишутка тесе чĕннĕ. Уписем килте пулман, вĕсем вăрмана уçăлса çӳреме кайнă.

II.

Пӳртĕнче икĕ пӳлĕм пулнă: пĕри — апат çимелли, тепри — çывăрмалли пӳлĕм. Хĕрача апат çимелли пӳлĕме кĕнĕ те унта яшка антарнă виçĕ тирĕке курнă. Пĕр-



ремĕш тирĕкĕ, питĕ пысăкки, Михайло Ивановичăн пулнă. Иккĕмĕш тирĕкĕ, пĕчĕкреххи,— Настасья Петровнăн. Виççĕмĕшĕ, кăвак тĕслĕскер, — Мишуткăн пулнă.

Кашни тирĕкĕ çумĕнчех кашăк выртнă: пысăкки, вăтамми тата пĕчĕкки.

Хĕрача чи пысăк кашăкне тытнă та чи пысăк тирĕкрен яшкине сыпса пăхнă. Кайран, вăтам кашăкне тытса, вăтам тирĕкрен ăсса сыпнă. Унтан, пĕчĕк кашăкне тытса, кăвак тирĕкрен сыпса пăхнă. Мишуткăн яшки ăна пуринчен ытларах кăмăла кайнă.

Хĕрачан ларасси килнĕ. Пăхать — сĕтел умĕнче виçĕ пукан лараççĕ: пĕри, пысăкки, Михайло Ивановичăн; тепри, пĕчĕкреххи, Настасья Петровнăн; виççĕмĕшĕ, чи пĕчĕкки, Мишуткăн. Хĕрача пысăк пуканĕ çине ларма тăнă та ўкнĕ. Унтан вăтамми çине ларнă, анчах унта ларма майлă пулман. Вара пĕчĕк пуканĕ çине ларнă та кулса янă: ларма пит лайăх пулнă. Вăл кăвак тирĕкне хăй умне лартнă та çиме тытăннă.

Яшкине пĕтĕмпех сыпса янă, унтан пукан çинче сулланма тытăннă.

Пуканĕ çĕмĕрĕлсе кайнă та, вăл çĕре ӳкнĕ. Хĕрача тăнă, пуканне тăратса лартнă та тепĕр пӳлĕме кайнă. Унта виçĕ кровать пулнă: пĕри, пысăкки, Михайло Ивановичăн; тепри, вăтамми, Настасья Петровнăн; виççĕмĕшĕ, пĕчĕкки, Мишуткăн. Хĕрача пысăкки çине выртса пăхнă — вăл ытла аслă пулнă; вăтамми çине выртса пăхнă — вăл ытла çӳллĕ пулнă; пĕчĕкки çине выртнă — ку ăна шăпах пулнă та, вăл çывăрса кайнă.

## III.

Упасем килне выçса таврăннă та апат çиме шутланă. Пысăк упи хăй тирĕкне тытса пăхнă та хăрушă сасăпа:

— Кам ман тирĕкрен сыпса пăхнă?— тесе мĕкĕрсе янă.

Настасья Петровна хăй тирĕкне пăхса илнĕ те ытла хытах мар сасăпа:



— Кам ман тирĕкрен сыпса пăхнă?— тенĕ.

Мишутка хăй тирĕкĕ пушшине курнă та çинçе сассипе йынăшса янă:

— Кам ман тирĕкрен сыпса, пĕтĕмпех çисе янă?

Михайло Иванович хăй пуканĕ çине пăхса илнĕ те хăрушă сасăпа мĕкĕрсе янă:

— Кам ман пукан çине ларса пăхнă?

Настасья Петровна хăй пуканĕ çине пăхса илнĕ те хулăнах мар сасăпа мĕкĕрсе янă:

— Кам ман пукан çине ларса пăхнă?

Мишутки хăйĕн çĕмрĕк пуканĕ çине пăхса илнĕ те çухăрса янă:

— Кам ман пукан çине ларса, ăна çĕмĕрсе пăрахнă?

Упасем тепĕр пӳлĕме пынă.

— Кам ман вырăн çине выртса пăхнă?— хăрушă сасăпа мĕкĕрсе янă Михайло Иванович.

— Кам ман вырăн çине выртса пăхнă?— хулăнах мар сасăпа кăшкăрса янă Настасья Петровна.

— Мишутки, тенкел лартса, хăй кровачĕ çине улăхма тăнă та çинçе сассипе çухăрса янă:

— Кам ман вырăн çине выртнă?

Сасартăк вăл хĕрачана курах кайнă та, хăйне пусма тытăннă пек, çухăрса янă:

— Акă вăл! Акă вăл! Тыт! Тыт! Акă вăл! Ай, ай-ай! Тыт!

Вăл ăна çыртса илесшĕн пулнă. Хĕрача куçне уçнă та, упасене курса, чӳрече патнелле вăркăннă. Чӳречи уçă пулнă, вăл чӳречерен тăрст! сикнĕ те тарса ӳкнĕ. Упасем ăна тытайман.

*Л. Толстой.*




## Çуркунне пулать.

Йăл-йăл пăхать сар хĕвел:
кунтан-кунах ăшăтать.
Сисмесĕрех сивĕ хĕл
çур ăшшине парăнать.
Пур çĕрте те шурă юр
хĕвелпеле пусăрнать.

Пĕчĕккĕнех çуна çулĕ
навусланать, хуралать.
Ял хĕрринчи Митраппан
сарай çинчен юр тăкать.
Пĕчĕк ача сар Иван
шăхлич калать, савăнать.



Сăнаса пăхăр: Юр хĕллехи пекех-и? Çурт çиййĕсен хĕррисенче мĕнсем пур? Йывăç папакĕсем мĕнле улшăнса пыраççĕ? Мĕнле кайăк хăçан килет? Выльăх-чĕрлĕхсен çăмĕсем мĕнле улшăнаççĕ?

## Вĕçен кайăксем килни.

Çуркунне енне кун вăрăмланса пырать. Хĕвел хĕртнĕçемĕн хĕртме тытăнать. Шурă юр шыв пулса çырмасенче кĕрлесе юхма пуçлать. Чăн-чăн çуркунне шавласа çитет. Кăнтăр енне кайнă вĕçен кайăксем каялла вĕçсе килме тытăнаççĕ.

Мартăн çирĕммĕш тĕлнелле çуркунне йыхравçи — хура курак чи малтан вĕçсе çитет.

Мартăн юлашки кунĕсенче шăнкăрчсем персе çитеççĕ. Шкул ачисем вĕсене савăнăçлăн кĕтсе илеççĕ. Кашни вĕренекенех вĕсем валли йăвасем хатĕрлет. Йăвасене уйрăм шалчасем е йывăçсем çине çакса параççĕ.

Акă уй-хирте тăри юрри илтĕнет. Вăл та кăнтăр енчен вĕçсе килнĕ ĕнтĕ. Шăнкăрчсем тата ытти вĕçен кайăксем питĕ усăллă, вĕсем сиенлĕ хурт-кăпшанкăсене пĕтереççĕ.

Вĕçен кайăксем — пирĕн туссем.

---

1. Çуркунне пирĕн пата мĕнле кайăксем пуринчен малтан вĕçсе килеççĕ?

2. Шăнкăрч тата ытти вĕçен кайăксем этеме мĕнле усă кӳреççĕ?



### Шăнкăрч.

Пур кайăкран маларах
килтĕм вĕçсе, васкаса,
ывăннине пĕлмесĕр,
юрла-юрла, савăнса.

Çурт тăррине лартăм та
янăратрăм юррăма.
Савăнтартăм, култартăм
ачасене сăввăмпа.

Йăпăрт çеç хам йăвана
кĕре-кĕре тухатăп.
Ăшă вырăн тумашкăн
тĕксем, çăмсем пухатăп.

*Н. Шелепи.*

---

Çуркунне пирĕн пата мĕнле кайăксем пуринчен малтан вĕçсе килеççĕ?

Шăнкăрчсем этеме мĕнле усă кӳреççĕ?

Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.

Тупмалли юмах.

*Хура йăлтăркăч*
*кĕрри хăмпре.*

(*Шăнкăрч.*)

Аялта панă сăмахсенчен кирлине суйласа çырса илĕр. Ятне «Пирĕн çурхи хăнасем» тесе çырăр.

Чĕкеçсем, уйăпсем, тăрисем, шăнкăрчсем, ула кураксем, чакаксем, шăпчăксем, кăсăясем, хура кураксем, çерçисем, тăрнасем, куккуксем, ула таккасем, пăрчăкансем, хур кайăксем, кăвакарчăнсем, путенесем.

## Чӳрече çинчи чечексем.

### I.

Хĕвел йăлтăртатса пăхать, анчах урамра сивĕ-ха. Йĕри-тавра юр выртать.

Уроксем пĕтнĕ пулин те, шкулта ачасем пур. Вĕсем паян чечексем акаççĕ. Малтан пĕчĕк ещĕксене кĕркун-

не хатĕрлесе хунă кăпка тăпра тултарчĕç. Унтан чи шултра вăрăсене суйласа илчĕç те акрĕç. Шăварнă хыççăн ещĕксене чӳрече çине лартрĕç. Дневник çине çапла çырса хучĕç: «Мартăн 1-мĕшĕнче настурци акрăмăр».

Тепĕр кунне ачасем шкула пырсан ещĕксене пăхрĕç. Анчах унта хура тăпрасăр пуçне нимĕн те çук.

— Пирĕн кунта нимĕн те ӳсес çук,— хуйхăрчĕç ачасем. Учительницă вĕсене лăплантарчĕ:

— Темиçе кун кĕтмелле пулать. Ун чухне хăвăрах курăр. Халь тăпрара выртса нӳрĕпе тата ăшăпа вăрăсем шĕвеççĕ.

## II.

Эрнерен тин пĕчĕк симĕс тунасем курăнчĕç. Кашни туна çинче икшер çулçă. Ачасем питĕ хĕпĕртерĕç. Анчах симĕс тунасемпе юнашар темле курăксем шăтса тухнă. Вĕсене никам та акман. Çав курăксене ачасем çумласа тăкрĕç. Дневник çине: «Настурципе çум курăксем шăтса тухрĕç. Çум курăксене çумларăмăр. Настурци ӳсет»,— тесе çырса хучĕç.

Чечексем ӳснине ачасем кашни кунах сăнаса тăчĕç. Чечексем хăвăрт ӳснĕ. Уйăхран вĕсем ӳссе кайнă пирки патаксем лартса пама тивнĕ. Чечексем хăйсен çипписемпе çакланса патак тăрăх ӳсме тытăннă.

Май уйăхĕнче настурци чечек кăларнă. Чӳрече çинче вĕсем ытла та илемлĕн курăнса ларнă.

Ачасем дневник çине çапла çырса хунă: «Настурци чечеке ларчĕ».

## III.

Çуллахи каникула кайиччен ачасем шкул пахчинче çулăн икĕ енĕпе ансăр йăрансем тунă. Ещĕкри чечексене унта куçарса лартнă. Кун каçах дежурнăйсем çав чечексене пăхнă. Вĕсене шăварнă тата çӳлелле ӳсме

вăрăм патаксем лартса панă. Настурци патаксем тăрăх çӳллĕ ӳссе хăпарнă. Симĕс çулçăсем хушшинче питĕ илемлĕ чечексем кăвар пек йăлкăшнă.

Ачасем июнь уйăхĕнче дневник çине çакăн пек çырса хунă: «Настурцин малтанхи вăррисене пухрăмăр. Тепĕр çуркунне валли пирĕн вăрă нумай пулĕ. Çуркунне пирĕн чӳречесем çинче каллех чечексем пулĕç».

---

1. Ачасем чечексене лартма мĕнле тăпра хатĕрленĕ?
2. Чечексем хăçан шăтнă?
3. Хăçан малтанхи чечексем курăннă?
4. Ачасем чечексене мĕнле пăхни çинчен каласа парăр.
5. Чечексене йăрансем çине хăçан куçарса лартнă, вăррисене хăçан пухнă?

Чечексем ӳстернĕ чух хăвăр сăнанисене дневник çине çырса пырăр.

**Çуркунне çитсен.**

Пуш уйăхĕн[1] вĕçĕнче
хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
юр ирĕлчĕ васкаса.

Тусем, сăртсем хуп-хура
юрĕ кайса пĕтнĕрен.
Тухать курăк çăп-çăра
хĕвел хытă хĕртнĕрен.

Сивĕ, хаяр хĕл иртет,
каять йĕрсе, хурланса.
Сивĕ куççульпе йĕрет,
иртнĕ куншăн хуйхăрса.

---

[1] Пуш уйăхĕ — март.

Путăксемпе, варсемпе
çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет.
Анчах мĕнле йĕрсен те,
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет.

Хĕл куççулĕ шавласа
юхса кайрĕ çырмара.
Ачи-пăчи выляса
чупса çӳрет урамра.

*К. Иванов.*

---

Сăвăра юр çинчен, хĕл çинчен, шыв çинчен, курăк çинчен мĕн каланă?

Çак предложенисене каласа пĕтерĕр.

Сивĕ, хаяр... Тухать курăк...
Тусем, сăртсем... Ачи-пăчи выляса...

Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.

Т у п м а л л и  ю м а х.

Вĕçет — чĕнмест, выртать — чĕнмест, вилсен шавлать, чарăнма пĕлмест.

(*Юр çуни, ирĕлсе шыв пулни, юхни.*)



## Пăр кайни.

Хаваслă çуркунне çитрĕ. Юр хăвăрт ирĕлет. Урамсенче шыв юхма тытăнчĕ. Пирĕн ял çуммипе Çавал шывĕ юхса выртать. Хĕлле вăл пăрпа витĕнет.

Халĕ пăр çийĕн пăтранчăк шыв кĕрлесе юхать Эпир, ачасем, пăр каяссине кунсерен сăнатпăр. Акă хирсенчен, вăрмансенчен шыв кĕрлесе анчĕ те çырмари пăра хăпартрĕ. Çавал шывĕ кунсерен тулса пычĕ. Çурхи пăр йăшрĕ. Пĕр ăшă кун пăр шăтăртатса çурăлса илчĕ те аналалла шăва пуçларĕ.

— Пăр каять! Пăр каять!— тесе ачасем шыв хĕрне чупса анчĕç.

Пăр татăкĕсем капланса юхса анаççĕ, пĕрне-пĕри малалла хĕссе тĕртеççĕ.

Пĕр пысăкрах пăр татăкĕ çинче йытă юхса анать, вăл сиксе тухма вырăн тупаймасăр енчен енне чупкалать. Йытă, ачасене курсан, вĕрме тытăнчĕ. Хăй чĕлхипе ăна хăтарма ыйтать.

Çав самантра кĕпер патне колхозниксем пакурсем, лумсем, кĕреçесем йатса чупса анчĕç. Вĕсем кĕпер юписем çумне пырса купаланнă пăрсене ката-ката аналалла ăсатаççĕ.

Йытă та вĕсем патне юхса çитрĕ. Колхозниксенчен пĕри пăра çыран хĕрне туртса илчĕ те, йытă çавăнтах çыр хĕррине сиксе тухрĕ.

Эпир йытта çăлнăшăн çав тери савăнтăмăр.

---

Пăр кайнине курни çинчен каласа парăр.

Аялта çырнă предложенисене вуласа тухăр. Мĕн хыççăн мĕн пулнине йĕркелесе калав тăвăр. Калавне ят парăр та çырса илĕр.

Юр ирĕлсе çырманалла юхрĕ.

Пăр кайса пĕтрĕ.

Шыв тулса çырансенчен тухрĕ.

Пăр çĕмĕрĕлсе вакланма тытăнчĕ.
Пăр хăпарса хуралса пычĕ.
Шыв чакма пуçларĕ.



**Чĕкеçсем.**

Çурхи ăшă кунсем çитрĕç. Хура кураксем, шăнкăрчсем тахçанах вĕçсе килнĕ ĕнтĕ. Акă ман умранах пĕр хура пăнчă вĕлтлетсе иртрĕ. Чĕкеç! Чĕкеçсем те вĕçсе çитрĕç! Акă пирĕн лупас тăрринчи юплĕ патак çинех пырса ларчĕ пĕр чĕкеçĕ. Ларчĕ те шăрантарма тытăнчĕ хăйĕн çепĕç чĕлхипе:

Пĕчĕкçеççĕ пит-куçлă
Эреветлĕ, теветлĕ,
Хӳри вĕçне туй килнĕ,
Якат Петĕр, пăчăнтăррр!..

Эх, илемлĕ-çке юрри! Юрра илтсен ытараймарĕ пулмалла, ку чĕкеç патне тата тепри вĕçсе пычĕ. Халĕ чĕкеçсем иккĕн пулчĕç: «Эх, иккĕшĕ те пирĕн пӳрт умне йăва çавăрсанччĕ!»— тетĕп эпĕ.

Чĕкеçсем ман ĕмĕте пĕлнĕ пекех пирĕн пӳрт çамкине йăва çавăрма тытăнчĕç.

Васкасах ĕçлеççĕ чĕкеççем. Çăл патĕнчи лачакана вĕçсе каяççĕ те унтан тăмлă пылчăк çĕклесе килеççĕ. Пĕр икĕ кунтан чĕкеççем йăвине туса çитерчĕç.

Кунсем тата ăшăтрĕç. Хĕвел хĕртсе пăхма пуçларĕ. Виçĕ эрне иртсен, чĕкеççем чĕпĕ кăларчĕç.

*Г. Харлампьев.*

---

Чĕкеççем ăçта йăва çавăраççĕ?

Чĕкеç çинчен хăвăр мĕн пĕлнине каласа парăр.

**Тăри юрри.**

Колхозниксем акара.
Эпĕ вĕсен тĕлĕнче
ташла-ташла юрлатăп,
çунат сарса ташлатăп.

Чăрăлтатать çут тĕнче!
Çу шăраннă евĕрлĕ,
шăрантарап сăввăма,
савăнтарап сассăма.

*Н. Шелепи.*

---

Тăри пирĕн пата хăçан вĕçсе килет?

Тăри çинчен хăвăр мĕн пĕлнине каласа парăр.

Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.



## Çуркунне.

Акă ăшă çуркунне. Ҫайăксем вĕçсе килчĕç. Шăпчăксем юрлаççĕ. Хăва кăчкă кăларать. Ёнесем çерем çине тухнă. Хирте трактор кĕрлет.

## Йывăçсем çулçă сарни.

Çурхи хĕвел кунсерен çĕр çине хĕлхем сапать. Унăн ăшшипе йывăç тураттисем çинче папакĕсем кӳпчесе пыраççĕ. Часах хытă тăртаннă папкасенчен çемçе симĕс çулçăсем курăнма пуçлаççĕ. Темиçе кун иртсен, çулçăсем пĕтĕмпех тухса сарăлаççĕ.

Пахчара чи малтан хурлăхан çулçă кăларать. Ун хыççăн çӳçе, йăмра, чие, тирек, хурăн, вĕрене çулçисем тухса сарăлма тытăнаççĕ. Ҫăшт тăхтасан, садри улмуççисемпе сливăсем çулçăсем кăлараççĕ.

Юлашкинчен çăка хăйĕн шупка симĕс, çаврака çулçисене сарма тытăнать. Унăн кăтра та çаврака тумĕ ялпа хула урамĕсене илем кӳрет.

Ҫапла вара, пур йывăçсем те симĕс тум тăхăнаççĕ.

---

Çуркунне папкасем сарăлнине эсир те сăнаса пăхăр.

## Пан улми чечекĕ.

Юлташăмсем, тусăмсем,
çуркуннехи илемсем,
çĕр çийĕнче ӳсекен
йывăç-курăк, чечексем,
ман çийĕме пăхăр-ха!

Пурçăн чаршав витнĕ пек
витрĕм улма йывăçне,
чечек айне хăвартăм
чаплă шăпчăк сăвăçне.

Пётём колхоз сачёсене
ырă шăршă тултартăм,
мён пур ачи-пăчине
тутлă улма çитертём.

*Н. Шелепи.*

---

Çуркунне улмуççисем чечеке ларнине сăнăр.
Сăвва пăхмасăр калама вёренёр.



**Фикус.**

(Предметлă урок валли.)

Пирён класра фикус ÿсет. Фикусăн туни йывăçăн пекех. Çулçи питё пысăк. Эпир ăна кашни кун шăваратпăр. Тусан ларсан, çулçисене йёпетнё тутăрпа шăлатпăр.

Ирёкре ÿсекен фикус питё пысăк. Вăл хёл пулман çёрте ÿсет. Унăн туни тавра 60 утăма яхăн пулать. Çулçи пёр метра çитет. Фикус сёткенёнчен резинă тăваççё.

Илемлё пирки вăтам тăрăхра пурăнакан çынсем фикуса пÿлёмре ÿстерме тытăннă.

---

Сирён класра е килте фикус пур-и?

Хăвăр фикуса мёнле пăхни çинчен каласа парăр.

Ирёкре ÿсекен фикус çинчен эсир мён пёлетёр?

Мёншён çынсем фикуса пÿлёмре ÿстереççё?

Хăвăр пÿртре ÿсекен ÿсен-тăрансем çинчен каласа парăр.

Малтанхи пилёк предложение çырса илёр.

**Ёç пани:** Шкулта та, килте те чечек лартса ÿстерёр.

## Çурхи вăрман.

Юр ирĕлсе пĕтрĕ. Çырмасенче шывсем чакрĕç. Уйхир типрĕ. Çанталăк кунран-кун ăшăтса пычĕ. Сăрттусем симĕсленчĕç. Вăрмана экскурсие кайма палăртнăччĕ.

Пĕр ăшă кун пире учитель: «Ачасем, экскурсие вăрмана каятпăр»,— терĕ. Ку хыпара илтсен, эпир питĕ савăнтăмăр. Пĕр километр ытларах кайсан, эпир вăрмана та çитрĕмĕр.

Вăрман пире кайăксен юррипе кĕтсе илчĕ. Кунта сывлăш таса та уçă.

Кĕрхи çулçăсене сирсе, çеçпĕл, кĕрен чечек шăтса тухнă. Серте те çулçăланма пуçланă.

Авăс, çӳçе, шĕшкĕ, вĕрене, хурама çулçисене кăларма тытăннă.

Кĕçех вăрман шупка симĕс тум тăхăнать. Çурхи кунпа савăнса вăрманти кайăксем кĕрнеклĕ юрă шăрантараççĕ.

Ытла та ырă-çке çуркунне вăрманта!

*С. Юшков.*

---

1. Хăвăр вăрмана кайса килни çинчен каласа парăр.
2. Вăрманта эсир мĕн курнă?
3. Мĕнле йывăçсем çулçă кăларнă?



## Пыл хурчĕсем апат шырама тухни.

Акă пыл хурчĕ те вăранчĕ. Куçĕсене тĕклĕ урисемпе тасатрĕ. Унăн юлташĕсем те хускалчĕç. Вĕсем шăтăкран пăхса илчĕç. Ку-

raççĕ: хĕвел йăлтăртатса пăхать, пур çĕрте те çап-çутă, ăшă. Вĕллерен тухрĕç те улма йывăççи патне васкарĕç.

Анчах вĕсем пит ир вĕçсе пынă: улма йывăççин чечекĕсем папак ăшĕнче пулнă-ха.

Пыл хурчĕсем чие йывăççи патне вĕçсе кайнă, анчах ун çинче те çурăлнă чечек пĕрре те çук.

Выçă пыл хурчĕсем килне таврăнма тăнă пулнă, анчах пĕр йывăç тĕмĕ айĕнче тĕксĕмрех чечек — фиалкăларнине курах кайнă. Унăн чашăкĕнче пылак сĕткен туллиех пулнă. Пыл хурчĕсем ĕçсе-çисе тăраннă та киле вĕçсе кайнă.

*К. Ушинский.*

---

Вуласа тухăр: пыл хурчĕсем епле вăраннă?

Пыл хурчĕсем пыла ăçта шырани, ăна ăçта тупни çинчен каласа парăр.

**Пыл хурчĕсен юрри.**

(Юрă.)

Ылтăн çунатпа
йăл-йăл курăнса,
вĕл-вĕл вĕçетпĕр
колхоз садĕнче.
Ылтăн çуркунне,
чаплă çуркунне...
Ытармалла мар
сана, çуркунне.

Хитре чечексен
пылсене ĕçсе,
пинĕ-пинĕпе
çӳретпĕр вĕçсе.
Ылтăн çуркунне,
чипер çуркунне...
Ытармалла мар
сана, çуркунне.

*Н. Шелепи.*



**Сад пулать.**

Эпĕ пĕчĕккĕ, çапах
ĕçлемешкĕн юрататăп.
Хамăн çамрăк вăй-халпа
пултарулăх кăтартатăп.
Пиччепе эпир паян
килтен килтĕмĕр ирех:
грушă, сливă йывăççи
тата вунă улмуççи
лартрăмăр колхоз садне,
çаврака кӳлĕ патне.
Тепĕр икĕ-виç çултан
пионер пулатăп эпĕ.
Кунта килĕпĕр шкултан.
Ун чухне калатăп эпĕ:
пулчĕ чаплă сад пахчи—
сад пахчи — колхоз пахчи!

*И. Малкай.*

## Мĕншĕн тутлă?

— Мĕншĕн тутлă пан улми,
мĕншĕн тутлă çĕр çырли,
мĕншĕн тутлă хурлăхан?
— Пĕр сăмахпа каласан,
хамăр лартса тунăран.

*В. Давыдов.*

## Çил арманĕ.



Касрăм, касрăм çĕçĕпе,
турăм эпĕ çил арманĕ,
çурхи харсăр вăйĕпе
Çилĕ пулчĕ çавраканĕ.
Кăр-кăр-кăр туса арман
авăрать шалча çинче,
пырса курăр, кам курман,
вăл ларать пӳрт тăрринче.
Кунĕн-çĕрĕн авăрать,
халь мана савăнтарать.
Хамăн ĕç хама аван,
аттене чăрмантарман.

*И. Малкай.*

---

Ача мĕн тунă?

Вăл мĕншĕн «аттене чăрмантарман», тет?

Хăвăр çил арманĕ туни çинчен каласа парăр.

Çак калава учитель калани тăрăх çырăр.

**Ĕç пани:** Ĕç урокĕнче е пушă вăхăтра çил арманĕ тăвăр.

Япалана кăтартакан сăмахсене кĕртсе, çак калава çырса вĕçлĕр.

## Çуркунне.

Акă ăшă çуркунне çитрĕ. Кайăксем вĕçсе килчĕç...



## Çурхи уяв.

Çуркунне çитрĕ. Çуркуннепе пĕрле Май уявĕ те çывхарчĕ.

Эпир, шкул ачисем, совет халăхĕн уявĕсене кĕтсе илме юрататпăр. Уяв вăл пирĕн чун-чĕрене тем пекех савăнтарать. Учитель пире Май уявĕ ячĕпе сăвăсем калама, юрăсем юрлама вĕрентрĕ.

Уяв кунне эпир кашниех таса кĕпе-тумтир, атă-пушмак тăхăнатпăр. Ирех вара шкула пухăнатпăр.

Уяв ячĕпе çуртсем çинче хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ. Пирĕн шкул çинче те пысăк хĕрлĕ ялав çакăнса тăрать.

Уяв кунне пирĕн утренник пулать. Унта эпир юрăсем юрласа, сăвăсем каласа паратпăр. Утренника атте-аннесене те чĕнетпĕр.

## Май уявĕ.

Вĕлкĕш-вĕлкĕш, хĕм-ялав,
вĕлкĕш-вĕлкĕш çиле май.
Паян пирĕншĕн уяв,
паян — савăнăçлă Май.
Янăрать урам тулли
ачасен юрри-кулли;
пирĕн йышĕ йышлăрах,
юррисем янравлăрах.
Вĕлкĕш-вĕлкĕш, хĕм-ялав,
кашниннех паян уяв!

*Е. Афанасьев.*

## Май уявĕ Мускавра.

Майăн пĕрремĕшĕ — пĕтĕм тĕнчери ĕç халăхĕн чапла уявĕ. Çак кун Мускавра Хĕрлĕ площадьре çарсен парачĕ пулать. Çĕр çинче çуран çар иртет, сывлăшра самолётсем вĕçеççĕ. Совет влаçĕн пĕрремĕш çулхине пирĕн çĕршыв Май уявне хавассăн та ирĕккĕн уявланă. Çав кун Мускав çийĕн пĕртен-пĕр самолёт вĕçсе иртнĕ. Лётчик çав уяв ячĕпе самолётпа вун сакăр хут пуçхĕрлĕ çаврăнса кăтартнă. Вăл вăхăтра ку питĕ тĕлĕнмелле пулнă.

Халĕ Май уявĕнче Мускав çийĕпе темиçе çĕр самолёт вĕçсе иртет. Вĕсем питĕ хăвăрт вĕçеççĕ.

Пур çĕрте те хĕрлĕ хăмачсем. Урамсенче савăнăçлă ĕç çыннисен колоннисем тăраççĕ. Кашнин аллинче чечексемпе ялавсем. Вĕсем çар парачĕ пĕтсен, ретĕн-ретĕн Хĕрлĕ площадь тăрăх иртеççĕ. Партипе правительствăна ертсе пыраканĕсем тата урăх çĕршывсенчен килнĕ хăнасем вĕсене хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

---

Хăвăр Май уявне мĕнле кĕтсе илни тата уявласа ирттерни çинчен каласа парăр.

# Картинă тăрăх ĕçлесси.



Картинăна пăхса тухăр. Ачасем мĕн ĕçлеççĕ? Ачасене ят парса тухăр. Унтан çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне хăвăр юлташсен ячĕсене çырăр.

...йăран тăвать.
...лакăм тăвать.
...калча лартать.
...шăварать.
...шыв çĕклет.

## Çĕнтерӳ уявĕ.

Çуна пек шуса хĕл иртрĕ,
килчĕ çутă çуркунне.
Çĕнтерӳ уявĕ çитрĕ,
юрлăр унăн юррине.
Пĕтĕм халăхăн хавасĕ,
пĕтĕм кăмăлĕ паян
юрăпа çĕкленнĕ уççăн,

инçене кайса ян-ян.
Хатĕр пулăр итлемешкĕн,
ман юратнă ачасем:
каçхине салют параççĕ
пирĕн паттăр хуласем.
Саламлаççĕ вĕсем чыслăн
халăх паттăрĕсене.
Шеллесе аса илеççĕ
вăрçăра вилнисене.
Пĕтĕм халăхăн хавасĕ,
пĕтĕм кăмăлĕ ян-ян
юрăпа çĕкленчĕ уççăн.
Çĕнтерӳ кунĕ паян.

*И. Малкай.*




## Ç у л л а.

Çу çитрĕ. Урамра питĕ шăрăх. Чи малтан çĕр çырли пиçрĕ. Унтан хăмла çырли пиçме тытăнчĕ. Хирте ыраш тата тулă пулса çитме пуçларĕ. Часах вырма тухĕç.

Шкултa каникул. Ачасем садра тата çимĕç пахчинче ĕçлеççĕ. Вĕсем йăрансене çумлаççĕ, шăвараççĕ. Çумăр хыççăн йывăçсен тĕпне катаклаççĕ. Ĕçрен пушаннă вăхăтра юхан шыв хĕрне чупаççĕ, пулă тытаççĕ, шыва кĕреççĕ, çырла тата кăмпа татма вăрмана çӳреççĕ.

---

Çулла çанталăк мĕнле?
Чи малтан мĕнле çырла пиçме тытăнать?
Тыр-пул хăçан пулса çитет?
Ачасем мĕн ĕçлеççĕ?
Колхозсен çуллахи ĕçĕсем çинчен каласа парăр.



## Çуллахи ир.

Шупка шурăмпуçĕ
шуса хăпарать,
ирхи çăлтăр вучĕ
сӳнсе çухалать.
Йăлтăр! сывлăмланчĕç
чечек-курăксем.
Çерем çине анчĕç
уйра кĕтӳсем.
Çӳлелле шăваççĕ
кăвак тĕтресем.
Улăха васкаççĕ
хурсен картисем.
Хĕвел курăнайрĕ,
çĕршыв савăнать;
ял çынни вăранчĕ,
ĕçе тытăнать.

*С. Элкер.*

---

Çуллахи ир çинчен хăвăр мĕн вуланине каласа парăр.

Çак калава, предложенисем çине уйăрса, вуласа тухăр. Унтан çырса илĕр. Предложенисене пысăк саспаллипе пуçласа çырма тата предложени вĕçĕнче точкă лартма ан манăр.

## Аслатиллĕ çумăр.

Хура пĕлĕтсем хупласа илчĕç çиçĕм çиçет аслати авăтать çумăр чĕреслетсе çăвать шыв юхать акă çумăр иртрĕ тӳпе тасалчĕ каллех хĕвел йăлтăртатса пăхать.

Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсене кĕртсе çырăр.

Ене... парать. Сысна... парать. Сурăх... парать. Йытă... сыхлать. Кушак... тытать. Чăх... тăвать.

К и р л ĕ  с ă м а х с е м: кил, шăши, çăмарта, сĕт, аш, çăм.

«Пулăра» калава çырса илĕр. Сăмахсен сыпăкĕсене кĕске йĕрпе уйăрăр.



**П у л ă р а.**

Пĕрре Микула юлташĕсемпе пĕрле пулă тытма кайнă. Вĕсем пулла вăлтапа тытнă. Вăл кун вăлтана пулă нумай кĕнĕ. Каçхине вĕсем киле таврăннă.

**Аслă пахчаçă.**

I.

Пирĕн çĕршывра аслă пахчаçă Иван Владимирович Мичурин ятне пурте пĕлеççĕ.

Унăн ашшĕ сад-пахча ĕçне юрататакан çын пулнă.

Пĕчĕк Ваня кӳршĕри ачасемпе сахал вылянă. Вăл хăйĕн вăхăтне ытларах садра е çимĕç пахчинче ирттернĕ.



Унта вӑл пӑрҫан чи лайӑх пӗрчисене, чие йывӑҫҫин, сливӑн шултра вӑррисене суйласа ҫӳренӗ.

Унӑн кӗсйисенче яланах тӗрлӗ йывӑҫ вӑррисем пулнӑ. Килте вӑл вӗсене сортӑн-сортӑн хурса пынӑ.

Садра тата ҫимӗҫ пахчинче Ваньӑн хӑйӗн йӑранӗсем пулнӑ. Ҫав йӑрансем ҫине вӑл суйласа илнӗ вӑрӑсене акнӑ, вӗсене питӗ тирпейлӗн пӑхса ӳстернӗ. Вӑл ӳсен-тӑрансен чи лайӑх сорчӗсене: пылак пӑрҫа, шултра та пылак чие, сливӑ ӳстерсе кӑларма тӑрӑшнӑ.

Ваня сӑнавсем, опытсем тунӑ. Хӑш чух унӑн опычӗсем ӑнман, анчах ача куншӑн кӳренсе тӑман. Вӑл татах хӑйӗн ӳсен-тӑрансен вӑррисене акса-лартса пынӑ.

## II.

Мичуринӑн ашшӗ-амӑшӗ пуян пулман. Шкулта Мичуринӑн нумай вӗренме май килмен. Ҫавӑнпа вӑл, ҫамрӑклах пӗр вырӑна кӗрсе, хӑй ӗҫӗпе тӑранса пурӑнма пуҫланӑ. Анчах вӑл хӑйӗн юратнӑ ӗҫне — сад ӗҫне манман.

Ӗҫрен тухсан, кулленех вӑл садра мӗн те пулин тунӑ: лартнӑ ҫимӗҫсене шӑварнӑ, купаланӑ е опытсем тунӑ.

Кąçсерен, пуринчен ытла хĕлле, вăл çимĕç йывăççисем ӳстересси çинчен çырнă кĕнекесене вуланă.

Вăл çимĕç йывăççисен чи лайăх сорчĕсен вăррисене суйланă, вĕсене акнă, йывăçсене юратса пăхса ӳстернĕ. Темиçе çултан Иван Владимировичăн тĕлĕнмелле сад пулса тăнă.

Мичурин улмуççисен, грушăсен, чие йывăççисен, иçĕм çырлин çав тери паха çĕнĕ сорчĕсене ӳстерсе кăларнă. Халь колхозсен сачĕсенче пур çĕрте те улмуççисен, грушăсен, сливăсен, чие йывăççисен мичуринла сорчĕсем ӳсеççĕ.

*Кочетков* çырни тăрăх.

---

**А**ча чухне Мичурин пуринчен ытла мĕнле ĕçе юратнă?

Мичурин хăйĕн садĕнче мĕнле ĕçленĕ?



Мичурин çимĕç йывăççисене мĕнле майпа лайăхлатнă?

Çак калавра предложени варринчех пысăк саспаллипе çырнă сăмахсене тупăр. Вĕсене мĕншĕн пысăкран çырнине каласа парăр.

### Вăрман.

Ашă, ырă çуркунне
симĕсленчĕ сĕм вăрман.
Кăчăк туртать хăй патне
çул хĕрринчи ват юман.
Вăрман тулли кайăксем
шăратаççĕ юррине.
Чечек сарнă курăксем
илĕртеççĕ кашнинех.

### Ватă юман.

Пирĕн ял патĕнче вăрман пур. Вăл таран çырман икĕ енĕпе ӳсет. Çырма вĕçĕнче инçетренех пĕр ватă юман курăнать. Çав тери пысăк та ватă вăл юман. Ăна эпир, ачасем, виççĕн-тăваттăн хăлаçланса тытсан та ытамласа илес çук.

Йывăç миçе çул ӳснине, епле пĕлетпĕр-ха? Ăна кассан, пăларакан йăрăм-йăрăм çаврашкаллă сийсем тăрăх шутласа пĕлме пулать. Анчах ку юман миçе çула çитнине апла та пĕлеес çук. Мĕншĕн тесен ун варри хăвăл. Юманне кура хăвăлĕ те пысăк. Çав хăвăла эпир темиçен те кĕрсе вырнаçма пултаратпăр. Çак юмана пула ĕнтĕ кунти вăрмана «Юманçырми вăрманĕ» тесе ят панă.

Вăрман нӳрлĕх тытать, хăйĕн сулхăнĕпе çĕре типме памасть. Пирĕн таврари ялсем Юманçырми вăрманне сыхласа усраççĕ. Халĕ ытти çырмасене те йывăç лартаççĕ.

*Г. Харлампьев.*

# ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛНИ.

Çак калава çырса илĕр. Çын тата чĕрчунсен ячĕсене аялтан туртăр.

**Çырлана кайни.**

Çанталăк уяр пулнă. Ванюк, Палюк тата Варук вăрмана çырлана кайнă. Вĕсемпе пĕрле Хураçкапа Улай чупса пынă. Вĕсем пĕрер чĕрес çырла татнă та киле таврăннă.



Çак сăмахсене, аялта панă сăмахсемпе пĕрлештерсе, предложенисем туса çырăр.

Çĕвĕç... Учитель... Йытă... Самолёт... Çумăр... Хур... Çăка... Вут... Чĕкеç... Çырла... Ача... Хĕвел...

Хушмалли сăмахсем: вĕрентет, ишет, çунать, çутатать, пиçет, ўсет, вылять, чĕвĕлтетет, çăвать, вĕçет, çĕлет, вĕрет.

Çак сăмахсен çитмен сыпăкĕсене çырса çитерĕр.

Улмуç-... йăм-... пука-... çыр-... купăс-... ых-... вăл-... ти-... каш-... су-... ла-... кăва-...

Сăмахсем: йăмра, çăка, улмуççи, çырла, пукане, ыхра, вăлта, купăста, кашкăр, тилĕ, кăвакал, лаша, сурăх.

## Хĕвел, юр тата çил.

Пырать пĕр çын çул тăрăх, ăна хĕвел, юр тата çил тĕл пулаççĕ. Вăл вĕсене пуç тайрĕ. Вĕсем вара ку çын вĕсенчен кама пуç тайни çинчен тавлашса кайрĕç. Юрĕ калать: «Вăл мана пуç тайрĕ. Эпĕ ун çулне тултарса хурасран хăрать вăл: çулне çухатсан, эпĕ ăна хăйне те ая тăватăп»,— тет. Çилĕ калать: «Çук, ку çын мана пуç тайрĕ. Эпĕ ун çĕлĕкне вĕçтерсе каясран хăрать вăл, çĕлĕксĕр ăна сивĕ пулать»,— тет. Хĕвелĕ калать: «Тен, вăл эпĕ ăна хам шевлесемпе ăшăтса, çулне çутатса панăшăн мана пуç тайрĕ пулĕ»,— тет. Хайхисем çынтан хăйĕнчен ыйтса пĕлме килĕшрĕç те ăна калаççĕ: «Каласа пар-ха пире, ырă çыннăмăр, пирĕнтен хăшне пуç тайрăн эсĕ?»— теççĕ. Çынни вĕсене хирĕç калать: «Эпĕ хĕвеле пуç тайрăм: вăл мана пуринчен те ытла ырă кăтартать. Эсир те иксĕр ăна тав тăвăр, унсăр пуçне эсир хăвăр та çут тĕнчере пурăнайман пулăттăр. Хĕвел



ăшăтман пулсан, çил те пулман пулĕччĕ, пĕлĕтсем тухман пулĕччĕç, çĕр çине çумăр та, юр та çуман пулĕччĕç».

---

Хĕвел, юр тата çил мĕн пирки тавлашса кайнă? Çав тавлашăва çын мĕнле татса панă?

**Ĕçчен Куçук.**

— Çумăр çу; çумăр çу.
Хам эп çумăр — çу та çу!—
шӳт тăвать Куçук пĕрмай,
лейкăпа шыв сапнă май.—
Анне лартнă сахал мар
кишĕр, çарăк, мăн хăяр..
Нӳрĕк кирлĕ вĕсене,—
пахчари çимĕçсене!

*А. Галкин.*

**Хĕвелпе асамат кĕперĕ.**

(Юптару.)

Пĕрре çумăр хыççăн хĕвел пăхрĕ те, пĕлĕт çинче çичĕ тĕслĕ асамат кĕперĕ пулса тăчĕ. Асамат кĕперĕ çине кам пăхать, пурте унăн илемне курса савăнаççĕ. Асамат кĕперĕ мăн кăмăлланса кайнă та мухтанма пуçланă: «Эпĕ хĕвелтен те илемлĕрех, çавăнпа та ман çине пурте ăшшăн пăхаççĕ»,— тесе сӳпĕлтетнĕ.

Çав сăмахсене хĕвел илтнĕ те калать: «Эсĕ чăн та илемлĕ, анчах эпĕ пулман пулсан, эсĕ те çут тĕнче курайман пулăттăн вĕт-ха»,— тет. Асамат кĕперĕ кулать çеç, пушшех мухтанма пуçларĕ. Хĕвелĕ çилленсе кайрĕ те пĕлĕт хыçне пытанчĕ, асамат кĕперĕ те вара çавăнтах çухалчĕ.

*К. Ушинский.*

---

Асамат кĕперĕн тĕсĕсене каласа парăр.

## Ӑшӑ ҫумӑр.

Ӑшӑ ҫумӑр ҫуса иртрӗ,
сывлӑш уҫӑ та таса.
Ылтӑн асамат кӗперӗ
ҫӗкленейрӗ авӑнса.

Шурӑ хурӑн ҫулҫи тӑрӑх
тумла юхрӗ ҫӗр ҫине.
Ешӗл улӑх йӑлтах урӑх:
ытараймӑн илемне!

*В. Давыдов.*

Ҫанталӑк мӗнле пулассине пӗлмелли паллӑсем.

Уйӑх карталансан, ҫумӑр пуласса кӗт.

Чӗкеҫсем аялтан вӗҫеҫҫӗ пулсан, ҫумӑр пулать. Ҫумӑр пулас умӗн хурт-кӑпшанкӑсем ҫӗр ҫумнерех анса вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ.

«Ҫумӑр хыҫҫӑн» калава вуласа тухӑр та малтан икӗ сӑмахлӑ предложенисене, унтан виҫӗ сӑмахлӑ, юлашкинчен тӑватӑ сӑмахлӑ предложенисене ҫырса илӗр.

## Ҫумӑр хыҫҫӑн.

Ҫумӑр чарӑнчӗ. Хӗвел хӗртсе пӑхать. Ҫырмара шыв кӗрлесе юхать. Пахчара кайӑксем юрлаҫҫӗ. Ачасем урамра чупса ҫӳреҫҫӗ. Пӗлӗтсем сирӗлчӗҫ. Пур чӗрӗ чун савӑнать.

Предложенисене ҫырса илӗр. Картинӑсем вырӑнне сӑмахсем ҫырӑр.



*...чăхсене çитерет.*



*...ĕне сăвать.*



*...чупать.*



*...шывра ишет.*



*...ӳсет.*



*...пулă тытать.*



## Пионерсен уявĕ.

Манăн пичче — пионер. Майăн 19-мĕшĕ — пионерсен кунĕ. Çав куна пичче хăйĕн юлташĕсемпе питĕ кĕтет. Вăл куна вĕсем пысăк уяв пек уявласа ирттереççĕ. Уява пире те чĕнеççĕ.

Эпĕ халь пĕчĕк-ха. Пире октябрĕноксем теççĕ. Эпĕ мĕншĕн апла каланине те пĕлетĕп. Пирĕн çĕршыври ĕç çыннисем ирĕклĕ пурнăçа Октябрь уйăхĕнче çĕнсе илнĕ. Пире те çак уйăх ячĕпе çапла калаççĕ. Мана пионера тепĕр икĕ çултан тин илеççĕ. Эпĕ хам пионер пуласса тем пекех кĕтетĕп. Октябрятсем — вĕсем пулас пионерсем. Çавăнпа та эпĕ октябрĕноксен йĕркисене пурне те тимлĕн пурнăçлама тăрăшатăп.

Çак калавра мĕнле уяв çинчен калан̆ă?

Хăвăрăн октябрятсен çăлтăрĕн ĕçĕсем çинчен каласа парăр.

### Ю р ă.

Савăнăçлă ачасем эпир,
октябрĕноксем эпир.
Калаçмастпăр ытлашши,
пирĕн виçеллĕ сăмаххи.
Сасăсем ян янăраççĕ —

Хатĕр пул! Яланах хатĕр!
Çак отряда кĕрекен
пирĕн пек маттур пулать.
Отрядра халь пирĕн пурте,
вĕренетпĕр пит йĕркеллĕ.
Эпир çамрăк çеçкесем,
çĕнĕ пурнăç калчисем.

**Шурă хурăн.**



Кăтра хурăн, шурă хурăн
лартрăм кӳлĕ хĕррине.
Çатан аврăм, карта турăм —
хурăн юлчĕ варрине.
Ирĕн-каçăн шăваратăп
кăтра шурă хурăна:
хăвăрт ӳстĕр, çулçă сартăр,
илем кӳтĕр таврана.

*В. Давыдов.*



**Йăмра.**

Эпĕ ем-ешĕл йăмра
ӳсеп аслă урамра.
— Эс сыхла мана.
Эпĕ шăрăх вăхăтра
сарап хамăн чатăра.
— Эс ӳстер мана.
Хĕвел хĕртсен, ман айра
епле лайăх сулхăнра.
— Эс пăхсам мана.
Тымарсемпе тăп кăна
çирĕплетĕп çырмана.
— Эс упра мана.

*В. Давыдов.*

## Ç ă к а.

(Предметлă урок валли.)

Çăка — паха йывăç. Унăн турачĕсем пур еннелле те сарăлса тăраççĕ. Çăкан сарлака çулçи çемçе, чечекĕсем ырă шăршлă. Çăка чечекĕсем çинчен пыл хурчĕсем нумай пыл пуçтараççĕ.



Çăкаран тĕрлĕ япаласем тăваççĕ: чĕрессем, ачасене вылямалли япаласем, кил-çурт тавращĕнчи капăрлатмалли япаласем. Çăкана çĕçĕпе касма, якатма çăмăл.

Çăкан хуппинчен курăс тăваççĕ. Курăсран чăпта çапаççĕ, вĕренсем, канатсем яваççĕ.

Çуллахи шăрăх вăхăтра çăка ял урамĕсемпе хула урамĕсене илем кӳрсе ларать.

Каласа парăр.
Çăкан турачĕсем мĕнле?
Çăкан çулçи мĕнле? Чечекĕсем мĕнле?
Çăкан чечекĕсем çинчен пыл хурчĕсем мĕн пухаççĕ?
Çăкаран мĕн тăваççĕ?
Çăка хуппинчен мĕн тăваççĕ?
Çăка хăш уйăхра чечеке ларнине сăнаса пăхăр.
Малтанхи тăвата йĕркине çырса илĕр.

## С а н ю к.

Пирĕн пĕчĕк Санюк пур,
Вăл хăй вара пит маттур:
Ирех тăрать, тумланать,
Питне супăньпе çăвать.

Апат çиет, чей ĕçет,
Унтан ĕçе пикенет.
Тĕлĕнмелле Санюкран,
Пултаруллă пулнăран...
Санюк тухать картишне,
Йыхăрать сар чĕпсене:
— Чип-чип-чип-чип, килĕр,— тет,—
Апат çиме вăхăт,— тет.

*В. Давыдов-Анатри.*

## Кăмака туни.

Ку ĕç тахçанах пулса иртнĕ. Эпĕ ун чух киле пĕччене юлнăччĕ. Хам та çамрăк, тăваттăра анчах пулнă ун чухне. Ман пата Петя пычĕ. Эпир унпа сарай хыçĕнче кăмака тума шут тытрăмăр. Петя тăмран кирпĕчсем тăвать, эпĕ кăмакине тăватăп.

Эпир кăмака туса пĕтертĕмĕр. Кăмакана турпассем хутăмăр та чĕртсе ятăмăр. Мăкăрланса тĕтĕм тухма пуçларĕ. Хамăр кăмака тавра ташласа çаврăнатпăр.

Çанталăк вĕри. Хĕвел хĕртсе пăхать.

Акă пирĕн пата Çемен пичче чупса пынине куратпăр.

— Мĕн тăватăр эсир? Мĕн тăватăр?— тесе кăшкăрать хăй.

Эпир пахчана тарса ӳкрĕмĕр. Çӳллĕ курăк хушшинче малалла мĕн пуласса пăхса выртатпăр. Çемен пичче пирĕн кăмака патне пычĕ те вутта сӳнтерчĕ. Пирĕн енне пăхса:

— Текех кун пек ан хăтланăр, яла çунтарса яма пултаратăр,— терĕ.

---

Ачасем сарай хыçĕнче мĕн тунă?
Çемен пичче инкекрен мĕнле хăтарнă?
Çемен пичче ачасене мĕн каланă?

Вутпа хăвăр та ан выльăр, шăлну йăмăкусене те выляма чарăр.

Ваттисен сăмахĕ.

Вут-хĕмĕн алли вăрăм, вĕçерĕнсен ярса тытма çук.

---

Çак калава çырса илĕр.

### Фермăра.

Вера аппа фермăра ĕçлет. Михала пичче те фермăра ĕçлет. Вера аппа ĕнесене пăхать. Михала пичче сурăхсене пăхать. Вĕсем иккĕшĕ те тăрăшса ĕçлеççĕ.

### Пахча тăшманĕсем.

Май уйăхĕн вĕçнелле пирĕн шкул пахчинче çарăк тата ытти çимĕçсем сип-симĕс шăтса тухрĕç. Эпир вĕсене шăваратпăр. Çум курăк шăтсанах, ăна çумласа тăкатпăр. Çимĕçсем лайăх ӳсни пире савăнтарать.

Анчах чăх-чĕпсем, пахчана кĕрсе, йăрансене пăсма пуçларĕç. Вĕçен кайăксем те çамрăк калчана сăха-сăха илеççĕ.

Чăхсенчен хăтăлма пахча картине çӳлерех тытрăмăр. Кайăксене хăратма йăран çине катемпи лартрăмăр. Тин вара пирĕн йăрансем пăсăлми пулчĕç.

Пирĕн çимĕçсем вăй илсе илемлĕн ешерме те пуçланăччĕ. Унччен те пулмарĕ, вĕт хурт тапăнчĕ, çамрăк çулçăсене пĕтере пуçларĕ. Мĕн тăвас? Çуллахи çанталăкра хурт-кăпшанкă шутсăр нумай ĕрчет. Вĕсене часрах пĕтермелле.

Ку тăшмана пĕтерме учитель эмел илчĕ. Купăста айне, çарăксем хушшине кĕл сапса тухрăмăр. Учитель эмел сапрĕ. Вĕт хурт пĕтрĕ.

---

Çак калава вуласа, эсир пахчан мĕнле тăшманĕсем çинчен пĕлтĕр?

Пахча тăшманĕсемпе мĕнле кĕрешмелле?

## Пирĕн колхоз.

Пирĕн колхоз пысăк та пуян. Унăн халĕ сĕт-çу ферми, сурăх, сысна тата чăх-чĕп фермисем пур. Фермăсенче выльăх-чĕрлĕх çуллен нумайлансах пырать. Вĕсем паракан тупăш та çуллен ӳссе пырать. Колхозăн электростанци, виçĕ арман, пысăк мунча, клуб пур.

Çĕре лайăх ĕçлесе тăнипе пирĕн колхозăн тырри те, тĕрлĕ çимĕçĕсем те çулсеренех лайăх пулаççĕ.

Выльăх апачĕ тулăх пирки колхозăн лашисем, ĕнисем, сыснисем, сурăхĕсем мăнтăр, тутă çӳреççĕ.

Колхозниксен пурнăçĕ çулсеренех лайăхланса пырать.

Пирĕн колхозра кашни киле икшер хаçат тивет, журналсем те нумай килеççĕ. Килсеренех радио кĕртнĕ. Çамрăксем тĕрлĕ шкулсенче вĕренеççĕ. Ваттисем хушшинче те хут пĕлменни çук.

---

Хăвăр колхоз çинчен мĕн пĕлнине каласа парăр.

## Тăвата ĕмĕт.

Хĕл пулнă. Мĕтри пĕр тăвайкки çинчен çунашкапа ярăннă. Ярăнса ывăнсан, вăл киле хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе таврăннă та ашшĕ çумне пырса ларнă. «Эх, атте, хĕлле епле аван, питĕ савăк! Яланах хĕл пулсассăн, эпĕ питĕ кăмăллă пулăттăм»,— тенĕ вăл ашшĕне. Ашшĕ Мĕтрин сăмахĕсене кĕсйинчи кĕнеки çине çырса хунă.

Çуркунне çитнĕ. Мĕтри ула-чăла лĕпĕшсем хыççăн чупса киленнĕ, чечексем татса тултарнă, ашшĕ патне чупса пынă та калать: «Епле аван иккен çуркунне! Эпĕ яланах çуркунне пулмалла тăвăттăм»,— тет. Ашшĕ Мĕтрин ку ĕмĕтне каллех кĕнеке çине çырса хучĕ.

Çу çитрĕ. Мĕтрипе ашшĕ утă çулма кайнă. Вăрăм кун кунĕпех ача савăнса çӳренĕ: кăмпа пуçтарса, çырла

татса тултарнă, типĕ утă çинче йăваланнă. «Çăвăн вĕçĕ нихçан та пулминччĕ»,— тенĕ вăл ашшĕне касхине. Ашшĕ Мĕтрин ку сăмахĕсене те çырса хунă.

Кĕр çитнĕ. Çынсем пахчара çимĕçсем: хĕп-хĕрлĕ пан улмисем, сарă грушăсем пуçтарнă. Мĕтри тем пек хавасланса кайнă. «Кĕркунне çулталăк вăхăчĕсенчен чи лайăххи!»— тенĕ вăл ашшĕне.

Ашшĕ çырса пымалли кĕнекене уçнă та Мĕтрие вăл хĕл çинчен те, çур çинчен те, çу çинчен те çакăн пекех каланине кăтартса панă.

*К. Ушинский.*

---

Сирĕн шутпа çулталăк хушшинчи хăш вăхăт лайăхрах?

## Çулталăк хушши.

Шурă юр ирĕлет,
çеçен хир чĕрĕлет
ешĕл курăк ӳсет...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хĕвел хытă хĕртет,
ăшă çил вĕркелет,
сар ыраш çитĕнет...
Ку хăçан пулать-ши?

Хир илемĕ каять,
сĕм вăрман çаралать,
пĕрмай çумăр çăвать...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хирсенче юр анчах,
çырмара пăр анчах,
сивĕтет аванах...
Ку хăçан пулать-ши?

*К. Иванов.*

## Путене.

Касхине е ир енне
тухăр тулă пуссине,
итлĕр путĕр-путенен
янкăр уçă сассине.
Пĕтпĕлтĕк, пĕтпĕлтĕк!
Шăнкăрав пек чĕтренет.

Авăтать çине-çинех
йăпăр-йăпăр путене,
Пĕлтерет вăл çынсене
тулă хӳхĕм пиçнине.
Пĕтпĕлтĕк, пĕтпĕлтĕк!..
Хирĕпех халь илтĕнет.

*Ю. Петров.*



**Вĕренў çулĕ пĕтет.**

Тепĕр темиçе кунтан вĕренў çулĕ пĕтет. Эпир хĕл каçах шкула пĕр кун сиктермесĕр çӳрерĕмĕр. Лайăх вулама, тĕрĕс тата хитре çырма вĕрентĕмĕр. Пире Анфиса Васильевна учительницă вĕрентрĕ. Вăл ырă кăмăллă. Эпир ăнланмасан е пĕлмесен, пире тепĕр хут каласа ăнлантаратчĕ. Киле панă ĕçе туса килеймесен, уроксем хыççăн хăварса вĕрентетчĕ. Лайăх вĕренекенсене вăл мухтатчĕ. Эпир вара татах та тăрăшаттăмăр.

— Иккĕмĕш класра татах та аванрах вĕренме тăрăшăр,— тесе сĕнет вăл пире. Эпир иккĕмĕш класра та тăрăшса вĕренме сăмах патăмăр.

Çулла аван канса хамăр сывлăха çирĕплетĕпĕр. Иккĕмĕш класра та тăрăшса вĕренĕпĕр.

---

Каласа парăр.

Сире кам вĕрентет?

Учительницă ятне мĕнле саспаллипе пуçласа çырнă тата мĕншĕн?

Хăвăр пĕрремĕш класра мĕнле вĕренни çинчен каласа **парăр**.

## ТУПМАЛЛИ


Хĕлле . . . . . . . . . . . . . . . 4
Предложени . . . . . . . . . . 6
Предложени хыççăн точкă лартасси . . . . . . . 10
Предложение пысăк саспаллипе пуçласа çырасси . . . 14
Предложенисене сăмахсем çине уйăрасси . . . . 21
Шкул . . . . . . . . . . . . 22
Япаласем çинчен предложенисем тăвасси . . . . . 25
Сăмах сыпăкĕ . . . . . . . . . . . 29
Сыпăксенчен сăмахсем тăвасси . . . . . . 35
Çемье . . . . . . . . . . . . . 37
Сăмахсене сыпăксем çине уйăрса çырасси . . . . . 38
Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси . . . . 43
Сасăсем . . . . . . . . . . . . 52
Совет Çарĕ . . . . . . . . . . . 55
Япалана пĕлтерекен сăмахсем . . . . . . . 58
Хулапа ял . . . . . . . . . . . 66
**Кам? мĕн?** ыйтусемпе ыйтăнакан сăмахсем . . . . 68
**Мĕнле?** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсем . . . . . 72
Таса пул — сывлăхлă пулăн . . . . . . . 75
**Мĕн тăвать?** ыйтупа ыйтăнакан сăмахсем . . . . 76
Çын ячĕсене, хушамачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси 80
Ленин кунĕсем . . . . . . . . . 83
Килти выльăхсем тата тискер кайăксем . . . . . . 87
Выльăх-чĕрлĕх ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси . 91
Çуркунне . . . . . . . . . . . . 106
Çулла . . . . . . . . . . . . . 125
Вĕреннине аса илни . . . . . . . . . . 131



**Сергей Павлович Юшков,**
**Василий Ефимович Ефимов**

**РОДНОЙ ЯЗЫК**

**Книга для чтения и грамматических упражнений**
**для 1 класса начальной школы.**

На чувашском языке

Редактор *А. С. Отачкин.* Худож. ред. *В. Ф. Солодовников.*
Технический редактор *Л. И. Иванова.* Корректор *Ю. Т. Миронова.*

НТ 02462. Сдано в набор 2/IV-1962 г. Подписано к печати 5/VI-1962 г.
Формат 60×92 1/16. Печатн. л. 9, уч.-изд. л. 5,08.
Тираж 32 000 экз. Заказ 743. Изд. № 120. Цена 13 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
*г. Чебоксары, Володарского, 5.*

K

Цена 13 коп.